рег. №135. 40—73

2914

ИВАН МУЧИ

# КУЛĂШЛА КАЛАВСЕМ

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
1940

ИВАН МУЧИ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве ______
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
21 января 1941 г.
Подпись [illegible]

# КУЛĂШЛА КАЛАВСЕМ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар ◆ 1940

Редактор С. В. ЭЛЬГЕР
Техредактор Ф. Я. ЯКОВЛЕВ
Корректор Г. ИВАНОВ
Обл. худ. Г. ХАРЛАМПЬЕВА

Сдано
в произв. 4|XI
1940 г. Подп. к печати
27|XI-1940 г. Печ. листов 2,62
Печ.знак. 41.280 в п. л. Тир. 3000 экз.
Формат бумаги $60 \times 92$ 1/32
Заказ № 1957
НТ—3004

Типография № 2 Наркомместпрома
Чувашской АССР, г. Алатырь.

## ÇУК ТУРĂСЕН „ÇУК ТУ“ ÇИНЧИ КОНФЕРЕНЦИЙĚ

Пĕтĕм тĕнчери тĕнсен çук туррисем „Çук ту“ çине пухăнса конференци тума тытăннă. Конференцире харкашу тухса кайнă. Ăна пуçласа яраканĕ христиансен турри Христос пулнă. 33 çулхи ватă хусах хăй çурални çинчен аса илнĕ. Вăл каланă:

— Ку ту çинче ларма калама çук аван. Сывлăш уçă. Ман аннене йывăр çын тăвакан святой сывлăш вĕрет пулмалла кунта,—тенĕ.

— Мĕнлескер пулнă сан аннӳ?

— Таса хĕр пулнă. Вăл арçынна пĕлмен. Уллахсене çӳремен. Арçынна пĕлмесĕрех мана çуратса янă...

— Кам каларĕ сана ун çинчен? Кам каларĕ?—кĕрлесе кайнă çук турăсен пуххи.

— Евангели кĕнекисене çыракансем—Матвей, Марк, Лука, Иоанн çапла калаççĕ. Ĕненместĕр пулсан, вуласа пăхăр...

— Хĕртен çуралнă, тенĕ-и евангелире? Çаплах каланă-и?

— Çук, апла пулма пултараймасть! Намăса пĕлмесĕрех суятăн эсĕ!.. Ă-ă, жулик!..

— Мĕн пирки эсир кĕвĕçетĕр-ха? Сирĕн те таса хĕртен çуралса тухас килчĕ-им?— тенĕ Христосĕ.

— Кулать тата пирĕнтен! Парăр ăна ĕнсерен!..—тенĕ виççĕн-тăваттăн пĕр харăс.

Тем те пĕр, усал сăмахсем каласа вăрçма пуçланă хайхи Христоса ытти турăсем.

Усал сăмахсем калакансене хирĕç Христосĕ каланă:

— По-богоматерному не выражаться! — тенĕ.

Лешсем итлемен. Пушшех харкашса кайнă.

Вара Азире пурăнакан индуссен Будда ятлă турри трибуна çине улăхса тăнă та, чуллă шăлĕсене качăртаттарса, хăй çинчен юмах пуçласа янă:

— Пире Христос суя чăпти тыттарасшăн. Таса хĕртен çуралтăм, тет. Эпĕ, вăт, чăнахах таса хĕртен çуралнă. Ман çинчен калакан юмахсем Азири халăхсем хушшинче Христос çуларнă тенĕ вăхăтчен пĕр пин çурă çул малтан çӳренĕ. Вăл юмахсене ăслă çынсем Христос çуралнă тенĕ вăхăтчен 500 çул малтан кĕнекесем çине кĕртсе хунă. Вăл кĕнекесенче эпĕ çӳлтен анса таса хĕртен ӳтленсе çуралнине пит аван кăтартса панă. Эпĕ çуралнă чухне пĕлĕт çинче паллă çăл-

тăр курăннă, мана пуççапма патшасем пухăннă, çӳлти çарсем мухтаса юрланă...

— Ах, шăпăрлан!—тенĕ, Буддана тĕртсе ярса, китайсен Конфуци ятлă пророкĕ.—Эпĕ, вĕт, хĕртен çуралаканни, — эсĕ мар! Ёненместĕр пулсан, мана ĕненекенсенчен кайса ыйтăр. Ака Ван-Цзин-Вей сутăнчăка чĕнсе килсен, парĕ сире хăлха чикки!..

— Эсир иксĕр те жуликсем!—тесе сиксе тăнă Фриги çыннисен Аттис ятлă турри.— Хĕртен çуралтăмăр, тесе суйма тытăннă! Манăн анне Нанна ятлă таса хĕр пулнă.

— „Нанна? Ха-ха-ха! Нанна! „няня-нянька"!.. Алиментпах пуйса кайнă пулĕ сан няньку,—тенĕ ăна хирĕç Египет çыннисен Ра ятлă турри, бамбукран тунă туйипе хăмсарса.—Мана, вăт, Нейт ятлă анне упăшкасăрах çуратса турă туса янă.

— Горус ятлă эпĕ,—сиксе тухнă тепĕр турă.—Изида ятлă турăран çуралнă теççĕ мана. Ёненместĕр пулсан, хам çурални çинчен доклад туса парам. Материалсем сахал мар юмахсенче.

— Çук, апла мар пуль... пĕр-пĕр аскăн арăмран çуралнă пулĕ эсĕ,—ахăрса янă ыттисем.

— Çук, суймастăп. Египет çыннисен Изида ячĕпе лартнă чиркӳне кайăр та унта ман анне сăнне курăр. Сăнĕ айне çапла çырнă:

„Эпĕ—Горус король амăшĕ, никам та ман тумтир аркине уçайман", тенĕ.

Америкăри индеецсен турри Вицлипуцли чул чышкисене чăрмăртаса пĕрех сулса янă Горус çинелле. Горусĕ ишĕлнĕ анна.

— Ман аннем Котликка ятлă,—тенĕ вăл ыттисене.—Таса хĕр пулнă вăл. Ун пек таса хĕр тĕнчере урăх пулман, теççĕ индеецсем. Кам ман аннене таса хĕр темест, çавăн шăлĕсене çапа-çапа çĕмĕрем!..

— Халĕ хĕрĕнкĕрех пулсан та, сан айнах пулас çук-ха!—ӳсĕр сасăпа мĕкĕртетнĕ грексен Дионис ятлă турри.—Сан аннӳ анчах таса хĕр пулнă, тетĕн-и? Ман аннем—Персефона—таса хĕр пулман-им? Ах, виллӳ карăнманскер!—Индеецсен туррине çӳçĕнчен ярса илнĕ те унăн пуçне малалла туртса, каялла тĕксе ярса, кăшкăрашнă.

Турăсен ушкăнĕ хумханса, шавласа кайнă. Египет çыннисен турри Озирис та, Сирия çыннисен турри Адонис та, перссен—Митра ятлă турри те, Рим çыннисен турри—Юпитер та, Вавилон çыннисен турри—Таммуз та, грексен турри—Аполлон та, Ману та, Аменофис та, тата ытти турăсем те пĕр-пĕринчен ăмăртсах трукăн кăшкăрма тытăннă:

— Манăн аннем кăна таса хĕр пулнă!

— Санăн мар, манăн кăна!

— Манăн!..

Шав ӳснĕçемĕн ӳснĕ, çӳлерех çĕкленнĕ. Индуссен Ману ятлă турри, Аменофис ятлă фараон турра çĕре сарса пăрахса, унăн çурăмĕ çине ларнă та, ăна чул чăмăрĕпе ăçтан килнĕ унтан чыша-чыша кăшкăрнă:

— Сăмахна калла илмесен, хам кăларнă законсенче миçе стих—çавăн чухлĕ чышмасăр сан çинчен анмастăп...

Авалхи грексен Геркулес ятлă турри—паттăрĕ—çапăçакансем патне утса пынă та:

— Тăхтăр-ха, йĕксĕксем! — тесе, иккĕшне те пĕрер ĕнсе кукли çитерсе пăхтарнă.— Манăн аннем пек таса хĕр урăх çук!—тенĕ вăл татах хăмсарса.

Христос ытти турăсенчен урмăшнă сасăпа ыйтнă:

— Сирĕн аннĕрсем мĕн ятлă пулнă вара? Манăн Мария ятлă пулнă. Аван ят, вĕт, э?

— Манăн та Мая ятлă пулнă,—тенĕ Будда.

— Çăварна пăкăла?!—тенĕ, сĕкĕшекен вăкăр пек куç шурисене кăларса, грексен Гермес ятлă турри:—Ман аннем вăл Мая!

— Ăçтан сан пулать!—кăшкăрса хунă Атлас ятлă турă.—Мая ман хĕр вăл. Ĕненместĕр пулсан, Гомер çырнă „Одиссей" ятлă кĕнекене тупса вулăр. Унта та çаплах каланă.

— Марья, пирĕн чĕлхепе каласан, Мирра пулать,—Мирра ман анне пулнă. Çын амăш-

не ан йышăнăр-ха,—тенĕ Сирия çыннисен Адонис ятлă турри.

— Ман анне те Мая ятлă,—тенĕ Зевс, чултан тунă сухалĕсене тăратса.—Сирĕн аннĕрсем те Мая ятлă пулсан, эсир ман аннемрен çуралнă пулмалла.

— Мĕн сан аскăн аннŷнтан çуралма, хамăрăн анне çук штоль,—тенĕ Таммуз турă. Эпĕ декабрĕн 25-мĕш числинче çуралнине мана ĕненекенсем пурте каласа кăтартма пултараççĕ.

— Эпĕ те декабрĕн 25-мĕшĕнче çуралнă.

— Эпĕ те çавăн чух-çке!

Адонисĕ те, Дионисĕ те, вилсен святойсен хисепне кĕртнĕ Александр Македонский герой та, Озирис та, Аттис та, Агни те, Ману та, Митра та, Аполлон та, тата ытти турăсем те, пурте... пурте декабрĕн 25-мĕш числинче çуралнă-мĕн. Çуралнă хыççăн çĕр çинчи пурнăçĕсем пурин те пĕр майлах пулнă-мĕн... вилсен, пурте виççĕмĕш кунне чĕрĕлсе тăнă тата.

— Ак мăшкăл!—тенĕ Нейт ятлă турă.

— Тьфу!—тенĕ пурте пĕр харăс.

— Пирĕн пурнăçсем çинчен çыракансем пурте пĕр-пĕри çырнине, тепри-тепри çырнине вăрласа калавсем тунă иккен. Ун пек япала тунине вĕреннĕ çынсем „плагиатство", тепĕр майлă каласан, „литература вăрри" теççĕ.

— Ара вăл вăрăсене ахаль ирттерсе яма юрамасть, тăвансем!
— Чăнах та... ма вăрлаççĕ вĕсем! Суда парас!..
— Кама?
— Матвея, Марка, Лукана, Иоана...
— Ыттисене те!
— Пурне те!
— Çук, апла мар. Кун çинчен пирĕн никама та пĕлтерме юрамасть. Пĕлтерсен, пĕр ĕненекен çын та çĕр çинче юлас çук,—тенĕ тахăшĕ, ăсларăххи.
— Чăн!—тенĕ темиçе сасă харăс.
— Килĕшетĕр-и?
— Килĕшетпĕр.
— Килĕшетĕр пулсан—ал тăратăр!
Пурте аллисене тăратнă. Пĕр Милосри Венера ятлă хĕрарăм турă çеç аллине тăратайман, мĕншĕн тесен ун аллине такам çапса хуçнă пулнă.

* * *

Çук турăсен „Çук ту“ çинчи конференцине хам пуçран шухăшласа çыртăм. Конференцире каланисен сăмахĕсене тĕрлĕрен тĕнсен кĕнекисем çинчен илсе пуçтартăм... Тулта шартлама сивĕ. Нăтăр-нăтăр тăваççĕ çуна тупанĕсем. Декабрĕн 25-мĕшĕнче кунçаврăнать. Шур çиттипе витĕннĕ çĕр çине хĕвел

нумайрах пăхма пуçлать. Авалхи çынсем çавна сиссе: „Турă çуралать“, тенĕ...

Авалхи çынсем калаччăр, эпир сурхури кун та, мăнкун кунĕ те ĕçе тухар, ударниксен маршне ĕçре янтратар!

## МЁСКЁН УПАНККА

Ну, юлташсем, сире эпӗ пӗр истори каласа парам. Эпӗ ӑна хамӑн кукша пуҫран шухӑшласа кӑларман. Манӑн ватӑлнӑ пуҫ мими ӑна шухӑшласа кӑларма пултарас ҫук.

Тӳрех каласан, ҫав истори хамӑр ялти Упанкка ҫинчен пулать. Ҫав Упанккана пӗрре мӗлке пуҫлӑ пуп хӑй патне чӗнсе кӗртсе:

— Хуйхӑ сана, турӑ мӗн-мӗн тума хушнине тытса пыман Упанкка!—тенӗ.

Упанкка турӑсемпе ангелсем ҫинчен нумай шухӑшланипе шуралнӑ пуҫне кӑтӑрт-кӑтӑрт хыҫса илнӗ те:

— Халӗ те сан сӑмаххунтан тухмастӑп. Пӗрмай чиркӗве ҫӳретӗп. Мӗн ҫитмест-ши мана?—тенӗ.

— Акӑ мӗн,—тенӗ пуп.—Пирӗн хушӑра хальхи вӑхӑтра святуя тухнӑ ҫын нисҫта та ҫук. Сана эпӗ святуя кӑларма шухӑш тытрӑм. Ма куҫна чарса пӑрахрӑн? Акӑ сана евангели кӗнеки. Унта ҫырнисене пӗтӗмпех

тытса пурăнсан, пилĕк çултан пирĕн чиркÿре Упанкка сăнĕ умне пĕтĕм халăх çурта лартĕ.

Пуп панă евангелие тытса, Упанкка вĕренме ларнă. Пĕр эрне вĕреннĕ, ик эрне, виç эрне вĕреннĕ. Тăваттăмĕш эрнен малтанхи кунĕнче Упанкка, ирех тăрса, аслă урам варринчи ватă йăмра тăрне хăпарса, хăлат пек сарăлса ларнă.

Кĕтÿ яракан хĕрарăмсем ăна курсан, малтан, вăл турат касма хăпарнă пулĕ, тенĕ. Кайран, вăл ним тапранмасăр ларнине кура, унран мĕн тума хăпарни çинчен ыйтнă. Упанкка хирĕç пĕр сăмах та чĕнмен.

— Ан чăрмантарăр! Вăл çăмарта тума ларнă. Çăмартине тусан, хăех анĕ-ха,—тенĕ тахăшĕ кулса.

Кĕтÿ те тухса кайнă, Упанкка çав турат çинчех ларнă. Чылай вăхăт иртсен, арăмĕпе хурăнташĕсем чупса пырса, Упанккана йывăç çинчен вăйпа тытса антарнă. Вăйпа антарнăшăн Упанкка çиленнĕ. Антаракансене вăрçнă, кăшкăрнă.

— Мана эсир евангели кĕнеки тăрăх пурăнма памастăр!—тенĕ те вăл, кĕсъинчен евангели туртса кăларса, хушшине хăю хурса паллă тунă листине уçса, вуласа панă.—Акă илтĕр Матвей апостол çырнă евангели кĕнекин 6-мĕш главари 25-мĕш стихĕн-

че мĕн каланине: „Хăвăр чунăршăн, мĕн ĕçес, мĕн çиес тесе, ан кулянăр; хăвăр ÿтĕршĕн те, мĕн тăхăнас тесе, ан хуйхăрăр. Чун çимĕçрен, ÿт-пÿ тумтиртен паха мар-и? Вĕçен кайăксем çине пăхăр-ха: вĕсем акмаççĕ те, вырмаççĕ те, кĕлете те пухса хумаççĕ; вĕсене çÿлти ашăр тăрантарать". Эпĕ те вĕçен кайăксем пек пулас терĕм...

— Ял кулли! Сана кам тăрантарĕ-ха унта?

— Çÿлти атте!—терĕ Упанкка, кăвак тÿпери ĕне тирĕ пысăкĕш курăнакан пĕлĕтсем çинелле кăтартса.

— Мĕн хăтланма тытăнтăн ара, упăшкам?!—терĕ Упанккана ватă еннелле сулăннă арăмĕ, шăмăллă чăмăрĕпе куçĕсене шăлса.

— Çухал куçран, тамăк хуранĕ!—терĕ ăна хирĕç Упанкка.—Сан пеккисем çинчен Павел апостол акă мĕн каланă: „Хĕрарăм килтен тухса çÿремелле мар, халăх хушшинче, пуху таврашĕнче пулса çăвар уçмалла мар". Халăх хушшине тухса ма çăварна уçрăн? Ак сана, ак сана!—терĕ те чышмах тытăнчĕ арăмне.

Халăх хушшинчен темиçе çын тухса, Упанккана чарма пуçлаççĕ.

— Ан чарăр мана!—кăшкăрать хайхи чаракансене.—Антони Египетски каланă: „Эсир хĕрарăма курсан, хăвăр умăрта—этем мар, шуйттан хăех тăрать, хĕрарăм сасси вăл—çĕлен шăхăрни пулать", тенĕ...

Упанккана аран-аран лăплантарса, килелле салантăмăр.

Çак ĕç хыççăн, Упанкка çинчен кашни кун çĕнĕ хыпар сарăла пуçларĕ.

Чи малтан вăл пӳрт-çуртне сутса янă. Куна вăл Матвей çырнă евангелин 19-мĕш главинчи 20-мĕш стихра каланине тăвас шухăшпа сутнă.

„Иисус каланă: пит сăваплă пулассу килсен, кай та, мĕнпур пурлăхна сутса, мĕскĕнсене валеççе пар, санăн мулу пĕлĕт çинче пулĕ вара, тенĕ". Пĕтĕм мулăма сутатăп та пĕлĕт çинче мул тупатăп,—тесе лăплантарнă вăл хăйĕн пӳрт-çуртне сутнăшăн каçса кайсах йĕме тытăннă арăмне.

Çак ĕç пулнине илтсен, Упанкка патне пуп пынă.

— Укçуна пĕтĕмĕшпех мана пар. Эпĕ вара ăна ним ӳркенмесĕрех мĕскĕнсене валеççе парăп,—тенĕ Упанккана.

Упанкка, евангелире „ыйтакана пар" тенине аса илсе, мĕнпур укçине пупа тыттарнă.

Çак ĕç хыççăн Упанкка, вырсарникун чиркӳрен таврăннă чухне, ӳсĕр Пракуха тĕл пулнă. Пракухĕ:

— Кам эпĕ?—тесе шăлĕсене шатăртаттарсах ыйтнă Упанккаран.

— Эсĕ туррăн чури пулатăн.

— Сана „турран чури“ парам,—тенĕ те вăл, Упанккана сылтăм питçăмартинчен пĕтĕм вăйпа çупса янă.

Ăна Упанкка, „Пĕри-пĕри сана сылтăм питçăмартинчен çапсан, эсĕ ăна теприне те çаварса пар“ тенине аса илсе, сулахай питçăмартине çаварса панă. Лешĕ сулахайĕнчен те çапнă. Упанкки вара каллех сылтăммине çаварса панă. Пракухĕ сылтăмминчен те çутăлтарнă...

Пракухĕ чарăна пĕлменнине кура, ăна хирĕç тăрас шухăшпа, Упанккан сылтăм алли пўрнисем чышкăланма тытăннă-мĕн те, анчах „усала хирĕç ан тăр“ тенине аса илсе, вăл чышкине сўтсе янă. Çавăнтах ўсĕр хулигантан тарма тытăннă. Тарнă май такăнса ўксен, алли этем тислĕкĕ çине пулса вараланнă.

Киле таврăнсан, вараланса пĕтнĕ аллипех апат çиме ларнă. Арăмĕ ăна:

— Ма аллуна çумастăн?—тенĕ.

Упанкка, Марк çырнă евангелине уçса, çакна вуласа панă:

— „Фарисейсемпе кĕнекеçĕсем Иисусран ыйтнă: санăн вĕренекенўсем ваттисен йăлине мĕншĕн тытмаççĕ, аллисене çумасăрах çăкăр çиеççĕ, тенĕ. Вăл вĕсене хирĕç каланă: çынна ăшне кĕрекенни нимĕн те ирсĕрлентермест, ăшĕнчен тухаканни ирсĕрлентерет, тенĕ“. Çавăнпа çумастăп...

Тепĕр кунне Упанкка тухтăр патне кайнă. Тухтăр патне кĕрсен, малтан сăхсăхса илнĕ.

— Мĕн ыратать?—ыйтнă тухтăрĕ.

— Нимĕн те ыратмасть. Çак сылтăм алла касса памăн-ши, тесе килтĕм те.

— Ма касас?

— Çылăха кĕме илĕртнĕшĕн. Ĕнер Пракух ятлă этем хама хĕненĕ чухне, çак сылтăм алăм ăна хирĕç тăрасшăн, тăхăнтарса ярасшăн пулчĕ. Евангелире каланă: „Сана аллу е уру илĕртет пулсан, ху çумăнтан касса пăрах вĕсене", тенĕ. Касса пăрахмасан, вăл ал татах мана илĕртме хăтланĕ...

Тухтăр чĕрĕ алла касма килĕшмен. Упанкка вара хăйĕн хăрах куçне кăларса пама ыйта пуçланă.

— Ман куçăм Упрам арăмне ăмсанчĕ. Аскăн шухăшсем еннелле илĕртсе каясшăн вăл. Евангелире: „Сана куçу илĕртет пулсан, ăна чавса кăларса ывăтса яр: икĕ куçпа вутлă тамăка кĕрсе ӳкиччен, чĕрĕлĕхе хăрах куçпа кĕни авантарах пулĕ сана", тенĕ. Çавăнпа эпĕ ăна кăларса ывăтасшăн. Хамăн ăна тума халăм çителĕксĕр...

Тухтăрĕ сывă куçа кăларса ывăтма килĕшмен.

— Лăпланса килне каях. Ӳлĕмрен нихăçан та сывă ӳте кастарма пирĕн пата ан кил!— тенĕ хушăра, вăл Упанккан çиелти тумтирĕ

çинче пыйтăсем йăшăлтатнине курнă. Пĕр пыйтине тытса, урапа пусса вĕлерме, урайне янă.

— Ан вĕлер ăна. Турă усала хирĕç тăма хушман,—тесе ўкĕтлеме тытăннă тухтăра Упанкка.

Тухтăр патĕнчен киле таврăннă хушăра хайхи Упанккана пĕр ыйткаласа çўрекен евĕрлĕскер тĕл пулнă.

„Турă хăй ман пата ку ыйткалакана ячĕ пулмалла. Хамăр тăрăхра юлашки çулсенче ыйткаласа çўрекенсем пĕрре те курăнманччĕ-ха“, тесе шухăшласа илнĕ вăл, колхозăн аслă уйĕнче ешĕрсе сарăлакан калчи çине пăхса.

— Ман кĕпе çĕтĕк. Хывса памăн-ши кĕпўне?—тенĕ вăрă-хурахăнни пек çиçсе тăракан куçлă „ыйткалакан“.

„Пĕри-пĕри кĕпўне илес тесе тавлашсан, эсĕ ăна çиелти тумтирна та хывса пар“ тенине аса илнипе, пирĕн Упанкка вăр-вар çиелти кĕпипе сăкманне хывса тыттарнă.

Унтан „ыйткалакан“ малтан аялти кĕпине, унтан аялти йĕмне ыйтса сўсе илнĕ. Упанкка çаппа-çарамас тăрса юлнă, хирти чечексем хушшине кĕрсе ларса, пуп панă евангели кĕнекине кăларнă та Иисус ту çинче „вĕрентнĕ“ чухне каланă сăмахсене вуласа лăпланма тытăннă:

— „Тумтиршён мёншён хуйхăратăр? Хирти чечексем çине пăхăр-ха, вĕсем епле ÿсеççĕ. Вĕсем ĕçлемеççĕ те, авăрламаççĕ те. Эпĕ калатăп сире: Соломон, пит чаплă патша пулнă пулин те, вĕсем пек пĕрин чухлĕ те тумланайман. Эй, сахал ĕненекенсем, паян пур, ыран кăмакана пăрахмалли хирти курăка та турă çав тери тумлантарать пулсан, сире вĕсенчен авантарах тумлантармĕ-и“, тенĕ евангелире.—Турă мана та çак хирти курăксенчен авантарах тумлантарĕ-ха,—тесе, Упанкка хирти чечексем хушшине, çемçе курăк çине сарăлса выртнă.

Выртнă та выртнă. Уйра каçхи хĕвел урисем тăсăлса чупма пуçланă. Хĕвел аннă. Турă Упанккана хирти чечекесенчен авантарах тумлантарма пыман. Пĕлĕт çинче çăлтăрсем мĕкĕлтетме пуçласассăн, каç сивви вăйлах чĕпĕтме тытăнсассăн тин Упанкка хăйĕн килĕ еннелле тăрса утнă. Килне таврăннă-таврăнман, арăмĕнчен çиме пама ыйтнă:

— Çимелли енчен пĕр татăк çăкăр вĕçне çех юлтămăр. Ăна паянах çисе ярсан, ыран мĕн çийĕпĕр-ши?—тенĕ арăмĕ, куççулне шăлса.

— Ыранхи куншăн ан тăрăшăр, ыранхи кун хăйшĕн хăй тăрăшĕ... Мĕн ĕçес, мĕн çиес тесе ан кулянăр. Чун çимĕçрен пахарах,—тенĕ вăл арăмĕ каланине хирĕç, евангели кĕнеки çинчи сăмахсемпе.

Çак Упанкка тепĕр кунне, каçаллапа, хырăмĕ выççан, пуп патне кайса тарçа кĕрĕшсе сутăннă, терĕç ялти çынсем.

* * *

Суд курма халăх сахал мар пуçтаранна. Судьи яка тумланнă, вăтам çулхи çын, çырă çӳçне машинкăпах кастарса янăскер, Упанккана юлашки сăмах калама ирĕк пачĕ.

Упанкка, пуп патĕнче тарçăра пурăнса шуралса кайнăскер, ура çине тăрса, пуç тăррине хыçса илчĕ те тимлесех калама тытăнчĕ.

— Судья шăллăм, эпĕ кутăн-пуçăн калаçакан çын мар. Каларăм: пӳрт-çурт сутса панă укçана пĕр пус та каялла тавăрмарĕ, тесе... Урăх сăмах та çук. Тарçăра пурăннăшăн та малтан каланă хакран 14 тенкĕ те 50 пус чакарса тӳлерĕ. Суда панине илтсен, мана ӳкĕтлеме тытăнчĕ. Матвей çырнă евангелире „Ан айăплăр, хăвăр та айăплă пулмăр; епле айăппа айăплăр, хăвăра та çав айăппах айăплĕç“ тенине мантăн-им, тет. Эсрелĕ пусса кайманскер, суд умне тăрасран евангелипе витĕнсе хăтăласшăн! Тар юхтарса тунă çавăн чухлĕ укçана ахалех пупа пама эпĕ катăк ăслă çын мар текех. „Пуп куçĕ—нӳхреп куç“ тесе ахаль каламан,—тесе пĕтерсе хучĕ хăйĕн сăмахне Упанкка.

Суд канашлама карĕ. Шăп çур сехетрен приговор вуласа пачĕç: пӳрт-çурт сутса туна укçана тата леш 14 тенкĕ те 50 пусне пупран илсе Упанккана шыраса памалла туна.

Пуп тути мăрт! турĕ, Упанкка тути йăл! кулчĕ.

## ШĂНТАКАН

„Шăнтакан“ тесе мĕнле чире каланине те пĕлместĕр пулас-ха эсир. „Шăнтакан“ тесе „малярия“ ятлă чире калаттăмăр авал. Ярак мучи çырла пиçме хатĕрленнĕ вăхăтра шăнтакан чирпе чирленĕ. Шăнтать те шăнтать, тет. Тăлăп тăхăнса ларсан та, сивĕ чухнехи пек чĕтретет те силлет, тет. Ярак мучин курпунтарах çурăмĕ те, ансăртарах кăкăрĕ те шăнса кайнă, тет, ура тупанĕ те шăнса кайнă, тет, çӳçĕпе сухалĕ çеç шăнма пĕлмеççĕ, тет.

— Ку шăнтакан чиртен мĕнле те пулсан хăтăласах пулать, — терĕ, тет, пĕрехинче Ярак мучи, çăварĕнчи хаяр табак тултарнă, кушак пек „мăр-р, мăр-р, мăр-р“ тутаракан чĕлĕмне ĕмсе туртса.

Шăнтакантан мĕнле хăтăлмалли çинчен пĕрин патне кайса ăс ыйтать, теприне тĕл пулса ыйтать... Нумай çынтан ыйтнипе ăсĕ шутсăрах нумайланса кайсан, вăл пилĕк-ултă

катка пӳрте кӗртсе лартать те шыв тултарса хурать, хӑй каткасем хушшине тӑлӑпне хывмасӑрах кӗрсе ларать.

Унта вӑл миҫе сехет ларнине пӗлеймерӗмӗр, мӗншӗн тесен ун чухне ялта пӗр Сахрун ятлӑ пуянӑн анчах сехет пулнӑ; вӑхӑта ун чухне сехет тӑрӑх мар, хӗвел ҫине пӑхса пӗлнӗ.

Катка хыҫӗнче нимӗн тапранмасӑр ларакан Ярака куракан: ку—хӑйне чӑх выранне хурса, ҫӑмарта тума кӗрсе ларнӑ ӗнтӗ кунта, тесе шухӑшламалла. Шухӑшлассипулӗ вӑл, анчах Ярака унта ларма ҫӑмӑлах пулман: тен, нумай ларнипе, унӑн ик ури те ҫывӑрса ларнӑ, тен унӑн ларнӑ хушӑра „эхӗм-эхӗм" тесе ӳсӗрессите килнӗ; тен, кӳршӗ ҫынни Пракух пырсан, вӑл катка хыҫӗнчен тухасшӑн пулнӑ.

Пракухӗ, пӳрте кӗнӗ-кӗменех, унӑн шыв каткисене ҫутӑ парса тӑракан кукша пуҫне курах каять.

— Ха-ха-ха! Мӗн тума кӗрсе лартӑн унта?—тесе ыйтать вӑл.

— Ан шавла!—тет Яракӗ, пӑшӑлтатса.— Шӑнтакантан пытантӑм. Ҫапла тусан, шӑнтакан чир шывран хӑраса ҫын патне пымасть, теҫҫӗ. Кайран, ҫиленнипе, нихӑҫан та вӑл ҫынна пырса ермест, теҫҫӗ.

— А-а-а! Пулӑшу пур-и?

— Ҫук никак!

— Апла мар кирлӗ. Шыв каткисем хыҫне пытаннӑ та, анчах...

— Мӗн „анчах"?

— Хут ҫине „ҫав-ҫав ҫын килте ҫук" тесе ҫырса пӗрене ҫине ҫапмаллаччӗ.

Ярак катка хыҫӗнчен тухрӗ. Хут ҫыракана шыраса, ял тӑрӑх утма шут тытрӗ.

Кама ҫыртарас-ха? Хут пӗлекен ялта виҫ-тӑват ҫын пур та, анчах вӗсем те: „шӑнтакан-па ҫыхланиччен упапа ҫыхланас", тейӗҫ, ҫырса памӗҫ, тесе, хӑйӗн хытса кушӑрханӑ аллипе сухалне сӑптӑрать. Ял тӑрӑх ҫӳресен-ҫӳресен, аран-аран хут пӗлекен пӗр ачана пӗремӗкпе астарса, табак хучӗн тепӗр енне: „Ярак мучи килте ҫук, хӑнана кайнӑ", тесе ҫыртарать. Ҫырнӑ хутне чӗтрекен аллисемпе пӗрене ҫумне ҫыпӑҫтарса хурсан, катка хыҫне хутланса, курӑнмалла мар пулса, вырнаҫса ларать.

Сахалах мар вӑхӑт иртсен, Ярак арӑмӗ ҫум ҫумлама пахчана кайсан, пӳрте Упрам пырса кӗрет.

— Хуҫисем ҫук-и мӗн?— тесе, куҫӗсене чарса пӑрахса, йӗри-тавра пӑхса илет. Катка хыҫӗнчен кӑвак тӗтӗм хӑпара-хӑпара кайнине курсан, „мӗн тӗтӗмӗ-ши ку", тесе, катка хыҫне пӑхать. Катка хыҫӗнче Ярак мучи пӗр хускалмасӑр ларать, вӑл ҫурӑмӗпе сӗвеннӗ катка хӑми ҫумне ҫыпҫӑнса ларнӑ пек туйӑ-

нать. Унӑн ҫӑварӗнчен тухакан чӗлӗм тӗтӗмӗ, Упрам пынӑран, ҫил вӗрнӗ чухнехи пек хумханса каять.

— Э-э-э, Ярак?! Мӗн туса ларан?

Ярак шарламасть.

— Шӑшисем сыхлама кӗрсе лартӑн-и?

Ярак мӗн тума кӗнине каласа парать.

— Апла эппин!—терӗ Упрам, ун ҫине тинкерсе пӑхса.—Ӑнланатӑп. Анчах катка хыҫӗнче ма эсӗ чӗлӗмне паклаттаратӑн? Шӑнтакан эсӗ ӑҫта ларнине чӗлӗм тӗтӗмӗ тӑрӑх тупма пултарать.

Ярак мучи ӑшӗнче темскер чӗтренсе каять.

— Чӑн-ҫке!—тет вӑл, чӗлӗмне ҫӳп кӗтессинелле вӑрт! ҫеҫ ывӑтса ярать. Упрамӗ, Ярака чӑрмантарас мар-ха тесе, ҫӑм шлепкине тӑхӑнса ӗнси ҫине антарса лартать те, алӑка уҫса тухса каять. Ярак унтах ларса юлать...

* * *

Каҫ пулттипе яла саплӑклӑ сӑхманне йӳле янӑ, ҫурӑм хыҫне кутамкка ҫакнӑ курпун старик пырса кӗрет. Каҫса кайсах вӗрекен йытӑсене туратлӑ туйипе хӑмсаркаласа, ял хӗрринче пурӑнакан Ярак мучи килкартине чӑмать вӑл. Ярак мучин карчӑкӗ—Илтепи ун чухне лаҫран пӳртелле кӗретчӗ.

— Мана, ырӑ ҫын пулса, ҫӗр каҫма вырӑн тупса памӑр-ши?—тет ҫулҫӳрекен, пуҫне ма-

нахсем пек тайса.—Атте турă пулăшнипе Русалимран, Христос тупăкĕ патĕнчен таврăнатăп та, каç умĕн кĕрсе выртас, терĕм. Иисус Христос: „Эпĕ выçă чух эсир мана çитермерĕр; ĕçес килсе ăш çуннă чух эсир мана ĕçтермерĕр, çул çӳренĕ чух эсир мана хăвăр патăра кĕртмерĕр" тенине ан манăр.

Çулçӳрекене Илтепи кĕме хушрĕ. Старик, пӳрте кĕрсен, малти кĕтесре ларакан тусанлă турăш еннелле пăхса, чылайччен сăхсăхать те:

— Пурсăра та канăçлăх пултăр,—тет, сассине тăсса ярса.

Кăмака çинчен Ярак мучин çутă пуçĕ курăнса каять.

— Упăшку-и ку? Халсăр-и мĕн?—ыйтрĕ старик, Илтепи куçĕнчен пăхса.

— Халсăр пулнă çав,—терĕ Илтепи, пуçне усса.—Шăнтакан ернĕ. Нимпе те хăтăлаймасть.

Ярака шелленĕ пек пулса, старик пуçне сулкаласа калать:

— Ак инкек! Усалли тупăнĕ вăл, ырри курăнмĕ. Чирлесси пулĕ. Эпĕ Русалим хулине çитсе куртăм, сивве-ăшша нумай тӳссе ирттертĕм. Анчах чир-чĕрсенчен, усал-тĕселтен турă мана сыхласа усрарĕ, мĕншĕн тесен манăн святой шыв пур. Ана Русалимри святой тупăк айĕнчи çăлкуçĕнчен ăсса илтĕм.

Çав святой шыв кирек мӗнле чире те сирсе ярать.

Старик çинчен çулланса пăхакан куçӗсене илмесӗр итлесе паракан Илтепи хаш-ш! хуйхăрса илет те тархаслама тытăнать:

— Таса шывна ман Ярака ӗçтерсе пăхмăнши? Укçам çук та кӗпелӗх пир тата тепӗр алшăлли парăп. Тархасшăн сипле!

— Юрӗ,—терӗ старик, хавасланнине пытараймасăр.—Пӗр черкке ӗçтерӗп.

Вăл кутамккине салтрӗ те, унтан вараланса пӗтнӗ тутăр татăкӗпе чӗркенӗ бутылкине туртса кăларса, ăна карчăка тыттарчӗ.

— Ӗмӗр-ӗмӗр тавтăвăр!—терӗ вăл, çимелли пама ыйтакан кушакла пăхса.

Ярак, мӗшӗлтеткелесе кăмака çинчен анса, старике ал пачӗ. Арăмӗ бутылкăри таса шыва кашăк çине ярса, упăшки аллине тыттарчӗ. Ярак, шăнасем хăвалана чухнехи пек туса, темиçе хутчен сăхсăхса илчӗ те кашăкри шӗвек япалана тӳрех ӗçсе пачӗ.

— Тьфу!—терӗ вăл юлашкинчен, йӗрӗнсе кайса.—Сан ку—эрех-çке! Эрехе святой шыв тесе ӗçтерен! Тур хупман!

Çулçӳрекен, Ярак мучи çине тӗменле тӗлӗнсе пăхса илнӗ хыççăн, ура çине сиксе тăрса, кутамккине ярса тытать. Кутамккаран тутăрпа чӗркенӗ тепӗр бутылка туртса кăларать, пробкине уçса шăршласа пăхать,

шĕвекне чĕлхи çине илсе тутанать те ăна йĕрĕнсе сурса тăкать.

— Тур çырлахах!—тет хăй, айăпне туйса илнĕ сасăпа.—Мĕн туса хутăм-ха?! Святой шыв бутылки кутамккӑна юлнă, сана эрех лекнĕ. Эпĕ ăна апат хыççăн ĕçкелеме тесе туяннăччĕ... Каçарсамах, ырă çыннăм!

Старик сăмахĕсем чĕре çине кислота тумлатнă пекех туйăнчĕç Яракa. Вăл старике куштăрккa аллисемпе ĕнсе кукли çитерчĕ те пĕрех тулалла сирпĕнтерсе кăларчĕ. Старик сăхсăха-сăхсăхах урамалла тапса сикрĕ.

## ТЁШМЁШ ЧĂПТИ

Ирхи хёвел Ухливан тути çине хуллен шуса пычĕ те лап! хупласа лартрĕ. Ухливан мучи хăйĕн çумĕнче çывăрса выртакан карчăкне хĕнеме пуçларĕ. Чышать те чышать хăйĕн мăн чышкисемпе арăмне сулахай аяк пĕрчинчен. Çиленсех чышать. Арăмĕ кăртах сиксе вăранса кайрĕ.

— Ай, мĕн пулчĕ, Ухливан? Ай-уй, тăна кĕр! Мĕн ухмахланса выртатăн? Тилпĕрен çирĕн-и-мĕн?! Мĕн турăм эп сана, э?—тесе уласах йĕрсе ячĕ.

Ухливан нимĕн те илтмест,—чышать те чышать. Укахви стена çумнех лăпчăнса выртрĕ.

— Мĕн... усал ерчĕ-им мĕн куна? Тур çырлахах! Микул турă, мăн турă амăшĕ, хута кĕрсемех!

Ухливанăн куçĕ хупă, тутисемпе вăл темскер мăкăртатать, кĕлетки кăрт-карт туртăнкаласа илет.

— Ухливан, мĕн хăтланатăн? Тăр-ха, тăр! Турруна асăн,—тет карчăк, упăшкине силлесе.—Тăр, тетĕп!

Ухливан вăранать, йăлт-ялт пăхкалать— куçĕсемпе такама шырать, лăчах хура тара ӳкнĕ хăй, ларнă çĕртех сăхсăхма тытăнать. Карчăкĕ хуллен ыйтать:

— Мĕн пулчĕ ара сана, Ухливан? Усал хăратрĕ-и мĕн? Выртнă чухне турра пуççапма маннă, çавăнпа вăл. Пĕркунне эпĕ те, çавăн пек турра пуççапмасăрах çывăрса кайнă та, çĕрĕпех асапланса выртрăм. Турра манма юрамасть...

— Тĕлĕк куртăм... Упрампа иккĕн сĕм вăрманта çӳретпĕр пек. Вăрманти йывăççем шултăра, темиçе хăлаçлисем те пур. Хăшĕнхăшĕн тăррисем пĕлĕт патнех çитеççĕ. Пĕчĕк утмаçулпа кайсан-кайсан, симĕс уçланка тухрăмăр. Уçланкă варринче шапшурă, вĕр-çĕнĕ пӳрт ларать пек. Алăкĕсем уçă. Кĕтĕмĕр. Пăхатпăр—эпир трактире кĕрсе тăнă!.. Трактир хуçи, тачка ӳтлĕ çын. пире курсан:—Килĕрех, хăтасем! Çĕнĕ пӳрт лартнă ятпа сире укçасăрах ĕçтерĕп. Ман эрех нумай. Ĕçессе ĕçĕр, анчах çĕре ан тăкăр, пĕр тумлам тăксанах, шăрттан тăвăп сиртен,—терĕ, пӳрнипе юнаса.

Упрампа иксĕмĕр сĕтел хушшине кĕрсе лартăмăр. Ĕçме тытăнтăмăр...

— Тĕлĕкре эрех ĕçсен, хуйхă пулать,—терĕ арăмĕ йывăррăн.

— Эрехне ĕçеймерĕм çав,—мăкăртатса илчĕ Ухливан.—Черккине тута патне илсе пырса, ялт! йăвантарса хутăм. Ман эрех пĕтĕмпех çăвара мар, хĕве юхса анчĕ. Ку тĕлĕк виле пулассине систерет пулас. Тĕлĕкре шурă пўрт курсан, килйыш катăласса, теççĕ. Çитменнине тĕлĕкре трактир хуçи мана пуçран пачĕ. „Э-э, эсĕ манăн эрехе тăкма",—тесе, пĕрех çутăлтарсă ячĕ. Тĕлĕкре çын хĕнесен, тĕлĕк куракании чирлессе, теççĕ.

— Иртнĕ эрнере шăшисем ман çăматта çиме пуçланăччĕ,—хушса хучĕ арăмĕ.—Шăши тумтир таврашне çисен, каллех ырра мар. Иртнĕ тунтикун каç Хĕлĕпĕн хĕрлĕ йытти пирĕн еннелле пăхса уласа выртрĕ...

— Паян суда каймалла, çав пуçран тухмасть-ха. Вăрăмуйри анана Павăла памалла тусан...

Ухливан умне çав Вăрăмуйри анана тара панă кунсем тухса тăчĕç. Хырçă тўлемеллеччĕ. Çавăншăн сарă сăнлă, сулахай енчен хĕç, сылтăм енчен кўпшек револьвер çакнă, капăр аттисен кĕллисем çине шпорсем тăхăннă стражник саламатпа çапса ыраттарни... „Ыранах тўлетĕп" тесе, старостăпа стражник умне чĕркуçленсе ларса йăлăнни... Кăрлик

Павăлĕ патне ана тара пама чупни тата ытти те аса килеççĕ.

— Усалăн ури саккăр, теççĕ çав. Икĕ çуллăх тара панă анана ĕмĕрлĕхе сутнă тăвасшăн. Епле вăл хамăн ура айĕнченех çĕре туртса илесшĕн... Ĕмĕтсĕр!—тет Ухливан, урисене вырăн çинчен çĕрелле ярса.—Чи малтан сылтăм ура çине тăрас-ха, унсăрăн кунĕпе ятлаçса çӳремелле пулĕ.

Чӳречерен кĕрекен ирхи хĕвел пайăркисем хура урайне çутатаççĕ. Чӳрече умĕнче салакайăксем чĕвĕлтетни илтĕнет. Кăвакарчăнсем кăлтăртатса ачашланаççĕ. Сурăхсем макăраççĕ,—„кĕтĕве каясшăн пулмалла", тет вĕсен хуçи Ухливан, сăмси тăррине хыçса.

— Сăмса тăрри кĕçтет-и-мĕн?—сехри хăпса т ухнă сасăпа каларĕ Укахви.—Ай, Ухливан, сăмса тăрри кĕçтесен—вилет, теççĕ. Мĕнле эсĕ хуна-ху шеллеместĕн? Кĕçтесен те, хыçмалла марччĕ. Сăмсу пиркиех пуçна çиетĕн!

Урине сырса пĕтерсен, Ухливан çăпата кантри хыçалтан çыхăннине курать.

— Эй, урăлайман пăру!—тег вăл хăйне хăй.—Ваттисем каланă тăрăх, çула кайнă чух çăпата кантри малалла çыхăнсан—телей пуласса, хыçалтан çыхăнсан—ĕмĕтленни пулаймасть, теççĕ. Манăн хыçалтан çыхăнчĕ. Тьфу!

Салтма тытăнать. Сылтăм уринчи çăпата кантри пăртакçă кĕскерех пулнă-мĕн, ниепле те çыхăнаймасть малалла. Пĕр-икĕ вершук çеç вăрăмрах явмалла пулнă-мĕн те. Туртать, туртать Ухливан кантрисене, ниепле те çитерейместь. Акă вăл, кĕрçиппи çăмхи шырама тесе, хăрах аллипе тăлисене тытса, кĕтесселле утса каять. Тупрĕ. Çăмхине сӳткелесе, çиппине шăлпа татса илчĕ, сыпрĕ,— çăпата кантрисем малтан çыхăнчĕç. Халĕ ĕнтĕ çула тухма хăрамалла мар.

Ухливан çăвара шыв сыпса лаххан умĕнче питне-куçне çуса тăнă хушăра, маччаран пĕр таракан Ухливан пуçĕ çине çат! татăлса ӳкрĕ.—Ах, эсрелĕ!—терĕ Ухливан, маччаналла пăхса.—Темле таракансем хӳнаса карĕç кăçал? Ку каллех ырра мар. Вут-кăвар пуласса вăл. Çунса кайсан, чĕрĕллех тупăка кĕрсе выртас пулать вара.

Тулта Укахви сурăхсене кĕтĕве хăвалани илтĕнет. Пăтара çакăнса тăракан, Укахви йĕпетсе хăварнă алшăллие илсе шăлăннă хушăра, Ухливан пӳрне чĕрни çине шурă тухнине асăрхарĕ, шухăша карĕ.

„Пуç пӳрнен чĕрни çине шурă тухсан, мĕне систерет, тетчĕç-ха? Э, э, телей пуласса, теççĕ. Ку вăтам пӳрнен чĕрни çине ма тухнă-ха тата? Ку—хуйхă пуласса, теместчĕç-и çав? Тепĕр алăри кача пӳрни чĕрни те шуралнă:

юратни пуррине пĕлтерет. Ăçтан ман, ватă-скерĕн, юратни пулма пултарать? Ак тата сылтăм хăлха янăрать. Ку—ырă сăмах илтессе".

Тусанланса ларнă турăш умне кĕлтума тăчĕ. Чӳречерен ăна кĕтӳ ярса килекен арăмĕ ывăçи айĕпе инçетелле пăхни курăнать.

„Мĕне асăрхарĕ-ши ку?"—тесе шухăшласа илчĕ те Ухливан, каллех турă умĕнче мăкăр-татма тытăнчĕ. Вĕçĕмсĕрех сăхсăхать. Вăл, паян суд пуласса аса илсен, чĕркуçленсех ларчĕ.

Пуççапнă вăхăтра арăмĕ тип çăкăр касса хунă, тултан уйран илсе килнĕ.

Çиме ларчĕç. Шăп. Нимĕн те чĕнмеççĕ. Иккĕш те тĕлĕк çинчен, вилĕм çинчен тата паян пулас суд çинчен шухăшлаççĕ.

— Калас мар терĕм те,—терĕ Ухливана карчăкĕ,—ĕнер эпĕ ирех чăх-чĕпсене апат пама тухрăм. Пăхатăп, пĕр чăххин хӳри вĕç-не улăм пĕрчи çыпăçнă. Çын вилессе вăл.

— Виличчен Павăл айне пулас марччĕ. Суда лашапах каяс тетĕп. Лаша пур çинчен мĕншĕн çуран çӳремелле. Çисе тăрансан, мĕн кирлисене эсĕ хатĕрле-ха.

Карчăкпа старик çиме ларнă чухне ватти-сене асăнма манса кайнă.

— Ара,—терĕ карчăкĕ, сĕтел хушшинчен тăрса,—эпир ваттисене манса кайнă-иç. Ăçтан телей пулĕ-ха капла пире?

Пĕççисене шарт! çапрĕ. Пуçне сулкаласах тапратрĕ карчăк васкаса çăкăр касма. Пĕр чĕл касса илчĕ те ăна уйран ăшне чиксе кăларчĕ. Унтан, темĕскер мăкăртаткаласа, çав чĕлле алăк патне, çӳп-çап ăшне кайса пăрахрĕ.

— Çийĕрех, ваттисем.

Карчăкĕ пыр ярăннипе июк! текелесе илет. Ухливан сăкманне тăхăннă, çĕтĕк калпакне шырать.

— Ай-уй!—терĕ карчăкĕ.—Ухливан, мĕнле эс? Ара сан сăкман арки таврăнса кайнă. Кампа вăрçасшăн эс? Манпа вăрçасшăн-и?..

Ухливан, айăпа тухнă çын пек пулса, сăкман аркисене тӳрлетет.

— Ну, эппин, эп лашине кайса кӳлем-ха. Эс кирлисене хатĕрле,—терĕ те Ухливан, васкасах алăкне уçса ячĕ.

Алăк урлă каçнă чух, сылтăм ури алăк хушшине пулчĕ.

— Ку—çын килессе пĕлтерет. Ах, ку çынсемпе,—чăрмантарса кăна çӳреççĕ. Мĕн тăвас вĕсемпе?

Хĕвел ирхи апат вăхăтне çитнĕ. Уяр. Пĕр пĕлĕт татăкĕ те çук. Кураксем крак-крак! тесе пĕр-пĕринпе калаçаççĕ. Ухливан мучин ват йăмрисем çинче кашни çулах курак йăвисем нумай пулаканччĕ. Кăçал, темме, курак йăвисем сахалрах. Çуркунне Ухливан уншăн хуйха ӳкнĕччĕ... Кураксем килçуртран

писсен, телей тарать, теççĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл ун çинчен шухăшлама пăрахнă. Чĕкеççем явăнса çӳреççĕ. Вĕсем Ухливанран хăрамаççĕ те, Ухливан пуçĕ çинченех вĕçсе каяççĕ. Салакайăксем чĕлик-чĕлик тесе йăлт-ялт сикелеççĕ. Пур чĕрĕ чун та савăнать. Чĕрĕ чун савăнни Ухливан мучи кăмăлне каймасть. Ав, урамра, пускил çыннин хура йытти ăшă çанталăк пулнăшăн савăннипе йăлт-ялт йăванкаласа илет. Ухливан: ку йытă çумăра йăванать-ха. Мĕн тăвас халĕ çумăрпа? Калчасене çитĕнмелĕх уяр çанталăкĕ те кирлĕ пулать, яланах çумăрпа мар...—тет шăмарса. Çавăнтах тата сысна, çуралла сысна, çурисене чĕнсе, нăриклетсе çӳрет.

Ухливан шухăшĕпе çав сысна нăриклетни те пустуя мар, сысна вăл çанталăк сивĕтессе нăриклетет.

Витерен лашине çавăтса тухрĕ. Лаши, витере тăрса йăлăхнăскер, тухсанах карăнса илчĕ,—уçă сывлăша тухнăшăн хĕпĕртерĕ пулмалла. Ухливан кунта та тĕшмĕш тупрĕ.

— Инкек хыççăн инкек пуласса кĕтсех тăр. Мĕн карăнатăн, вăрра каясшăн-и-мĕн?— тесе, çат тутарчĕ чĕлпĕрпе янаххинчен.

Лаши, мĕншĕн çапнине туйса илеймесĕр, тулхăрса илчĕ. Ухливан шучĕпе, лаша тулхăрсан—çумăр пулмалла.

* * *

Аран-аран килтен тухса карĕ. Арăмĕ хапха алăкне хупса юлчĕ. Лашийĕ малтанах чупасшăн мар. Ухливан пушăпа çат! çапать. Лаши хӳрине çавăрса илет те, лăпăс-лăпăс чупкаласан, каллех чарăнса ларать. Ухливан:—Каясшăнах мар ман лаша, усалла сисет-и мĕн, тет. Хапха çывăхĕнчех пĕчĕк тиха, амăшĕ тавра чупса, йăлт-ялт сиккелет. Ухливана ку та килĕшмест: çумăр пуласса ку, тет. Улакурак вăрăммăн кăшкăрса краклатать,—каллех ку çумăр пулассине пĕлтерет. Çăмăрччен кайса килесчĕ-ха, тесе, Ухливан лашине хытăрах хăвалать. Çанталăк лайăх. Ыраш уйĕ сип-симĕс ларать.

Йăрансенче тата çул тăрăх ешĕл кураксем хавасланса пăхса лараççĕ, хăшĕ-хăшĕ чечексем те кăларма пуçланă. Лашапа пынине илтсен, симĕс ыраш ани хĕррисенчен путенесем пăрр! вĕçсе тухса, аяккалла вĕçсе каяççĕ. Тăрисем пуç тăрринче „чи-чи-чи, тăррин-тăррин“ тесе юрласа сывлăшра вĕçсе тăраççĕ. Пĕр ҫайăкĕ, темле кайăк вăл,—ĕçле-ĕçле çи, ĕçле-ĕçле çи, тесе юрлать. Илемлĕ çанталăк Ухливан чĕрине те хускатрĕ. Пуçне усса хуйхăрса çӳрекенскер, вăл та савăнăçлăрах пăхма пуçларĕ,—хуйхи-суйхине те манса карĕ. Сасартăк пĕри:

— Тытсам лашуна! Мён улпут пек ларса пыратăн,—терĕ.

Ухливан кăртах сикрĕ. Тăрантаспа пыраççĕ. Мужикĕ—ларчăк çинче, пупĕ—хыçалта сĕвенсе пырать.

Иртсе кайма çул хĕсĕк. Ухливан, калчана нумаях таптатмалла ан пултăр тесе, лашине пăртак пăрчĕ те, лешсем иртсе карĕç. Хирĕç пулнисен лашийĕ... лаши мар, кĕсрийĕ, Ухливантан иртсе кайсассăнах, утăмпа каяссăн пулчĕ. Мужик ăна шур патакпа çат тутарчĕ. Ухливан çакна курчĕ те:—Ма çапан кĕсрӳне шур патакпа,—хĕсĕр пулать вĕт!—тесе кăшкăрса ячĕ чăтаймасăр. Анчах лешсем илтеймерĕç,—вĕçтерчĕç малалла.

Сасартăк Ухливан хăй çамкине çат! çапса илчĕ.

— Ах, эсрелĕ,—тет вăл,—ку пуп пулчĕ-иç! Ĕç пулчĕ-и-ха вăл? Пупа тĕл пулсан, нихăçан та телей пулмасть, теççĕ. Мĕн тăвас ĕнтĕ? Те каяс, те каяс мар?..

Ухливан лашине тăратса шухăша карĕ. Лаши, мĕншĕн-ха мана тăратрĕ тесе, каялла, Ухливан çинелле, пăхса илчĕ те анчах нимĕн те пĕлеймерĕ. Хӳрипе вăрт-варт тукаларĕ те тапратрĕ çӳллĕ ӳссе кайнă хурхухсене çиме. Çулти курăк пит те тутлă çиме,—пуринчен ытла хуçаран вăрттăн çинĕ чух. Ӳпресем тапăнаççĕ. Вĕсене хăвалас тесе, лаши

ӳпресем ларнӑ тӗлти тирӗсене чӗтретсе те илет, хӳрипе ҫапса та пӑхать,—ӳприсем ҫав-ҫавах хӑрамаҫҫӗ.

Ухливан, сасартӑк пушине сулса ярса, лашана ҫат! ҫапрӗ те тилхепине сулахаялла туртма пуҫларӗ. Туртисене ҫавӑрчӗ те вӗҫтере пачӗ каялла. Лаши капла тунинчен тӗлӗнчӗ пулмалла: малтанах каясшӑнах марччӗ те, кайран, киделле кайнине туйса илсен, хавасланса юртма пуҫларӗ. Ҫул ҫинче пӗр мужик тӗл пулчӗ,—ҫав ялсемех.

— Ӑҫта карӑн?—тесе ыйтрӗ вӑл.

— Карӑм-ха,—терӗ те Ухливан, урӑх нимӗн те чӗнмерӗ.

* * *

Империализм вӑрҫи пуҫланиччен пӗр ҫул малтан, ҫула май, Ухливан патне кӗрсе тухма тиврӗ мана. Ухливан мучи ватӑлса кайнӑччӗ; карчӑкӗ, пичӗсем чылаях пӗркеленнӗ пулин те, ҫав-ҫавах вӑйпитти ҫӳретчӗ. Вӗсемпе эпӗ ун чухнехи ӗҫсем ҫинчен, ҫӗр хӗсӗкки ҫинчен калаҫса карӑм.

— Манӑн лайӑх аванах ӗмӗтсӗр Кӑрлик Павӑлӗ суд урлӑ туртса илчӗ те, пӗр ятран та катӑкрах ҫӗр ҫинче ӑҫтан ҫимелли ҫителӗклӗ тума пулӗ ӗнтӗ,—терӗ Ухливан, хаш! хуйхӑрса ярса.—Судӗнче хам пулаймарӑм. Хам пулнӑ пулсан, унӑн айнех пулас ҫукчӗ те...

Хăçан та пулин шалчи тулĕ-ха харампырăн, пирĕн алла кĕрĕ-кĕрех!—тесе тулалла пўрнипе юнаса илчĕ.

Ухливан мучи уҥ чухне те хăйĕн тĕшмĕшленсе пуранас йăлине хăварманччĕ. Пўрт тăрăх утса кайнă чухне Ухливан мучи таканчĕ те:

— Ир такăнсан, каçченех такăнмалла пулакан ĕнтĕ,—терĕ хуйхăрса.

Мана тăварпа çăкăр çитерсе ячĕç. Карчăкĕ:

— Тăварпа çăкăрах çитерем-ха. Тăварĕ кăштах йĕпеннĕ те... ăшăтасса пулин анчах. Лар-ха, лар,—тет. Вайпах сĕтел хушшине туртса лартрĕ.

Аван çынсем. Пынă çынна çăкăр лартмасăр кăларса ямаççĕ.

Вĕсен йытти пурччĕ. Саккул ятлă. Саккулĕ эпир апат çинине кусран пăхса ларатчĕ те, карчăкĕ ăна тапса илчĕ. Эпĕ кăна ăнланаймасăр карчăкĕ çине пăхрăм та, вăл мана:

— Йытă апат çинĕ чухне куçран пăхсан—хырăм тăранаймасть,—тесе тăнлантарчĕ.

Тырă-пулă çинчен калаçрăмăр. Тĕшмĕш чăпти—Ухливан мучи:

— Кăçал тырă ятламаллах мар пулчĕ те, килес çул темле пулĕ,—терĕ.—Унтри шăллăм шăрчăк мăян çинине курнă кăçал. Чăнчăнах курнă пулсан, килес çул тырă пулай-

масть. Темле. Çынсен пӳлмасан та, хамăн пулатех пулĕ, тетĕп те-ха, мĕншĕн тесен ака тунă чух ман сухакасси шалалла кĕрсе пĕтрĕ. Апла пулсан, тырă лайăх пулать, тетчĕç ваттисем... Темле ĕнтĕ?..—тет вăл.

Ухливанпа унăн карчăкĕ патĕнче эпĕ шăп пĕр çĕр каçрăм та тепĕр кунне ирех тухса хуланалла вĕçтертĕм.

Ухливанпа карчăкне çавăнтанпа урăх кураймарăм вара. Иккĕшĕ те империализм вăрçи хĕрсе çитнĕ вăхăтра пĕр çултах вилнĕ вĕсем. Ухливан вилес умĕн:

— Чунăм тăварланса çитрĕ. Кăрлик Павăлĕ çине тарăхни чĕремре çĕçĕ пекех тирĕнсе тăрать. Вăл тарăхăва хампа пĕрлех илсе каятăп. Сывă пул, ялйыш!—тесе çеç каларĕ, тет.

## ЧĔНМЕН „ХĂНАСЕМ“

Этеме канлĕх кирлех. Сехет маятникĕ вăл канмасăрах пурăнма пултарать. Канлĕхе юратакан япала мар вăл. Этеме канлĕх çăкăр-тăвар пекех кирлĕ. Канлĕх пулмасан, этем, ман пекех, жалоба çырма пултарать.

Авалхи чăвашсем каланă: хур ларнă вырăна пӳрт лартсан, пӳрт сивĕ пулать, ĕне выртнă вырăна лартсан—ăшă пулать, тенĕ. Мана пурăнма панă çурта авал çăл пулнă вырăна лартнă пулас: яланах çын çӳрет. Камкам пынине пĕлме—малалла каланине итле.

Пĕр ир, хамăр вырăн çинчен тăнă-тăман, мăрье тасатакан этем пырса кĕчĕ, хăрах аллине милке, тепĕр аллине хăрăм витри тытнă. Алăк урлă каçнă-каçман, кăмака юшкисене уçса пама хушрĕ. Мăрье тасатасшăн.

— Кăмака мăрьи—урана тăхăнмалли атă мар, кашни кун тасатмаççĕ ăна. Виçĕмкун тасаттарнăччĕ. Унтанпа пĕрре çеç хутнă. Хăрăмĕ тасатмалăх пулман-ха,—терĕм.

— Чӗннӗрен килнӗ эпӗ. Хӑрӑмне тӑвайманӑр пулсан, чӗнмелле марччӗ,—тесе хирӗҫет.

— Эпир чӗнмен. Суйса каламастӑп. Тепӗр уйӑхсӑр, килсен те кӗртместӗп,—терӗм хайхине, таса урайнех лартнӑ хӑрӑм витрине хура аллинчен тыттарса.

Капла каланӑшӑн мӑръе тасатакан ҫиленчӗ. Пире „йытӑ пичӗсем" тесе хӑварасшӑнчӗ пулас та, анчах эпӗ ҫиленнине кура, апла каламарӗ, „йыт туртасшӗ" тесе ҫеҫ хӑварчӗ. Мӗн тетӗр эсир? Мӑръе тасатакан тухса кайнӑ-кайман, тепӗр ватӑ еннелле сулӑннӑ хӗрарӑм—кӗпе-йӗм пама пычӗ.

— Ман пата кӗпе йӗм ҫума леҫнӗ сын ҫакӑнта пурӑнать-ши?—тет вӑл, пӗре ман ҫине, тепре арӑм ҫине пӑхса.

— Ай-уй, эпир кӗпе-йӗм ҫума паман-ҫке! Хушаматӑма каларӑм та, йӑтса пынӑ кӗпейӗме памасӑрах тухса шурӗ.

Тепӗр ирхине ҫӑмӑл автомашина пирӗн хапха умне йӑшӑл чарӑнса тӑчӗ. Шоферӗ, май мар кӗрнеклӗ йӗкӗт, кабинкӑран кӑтра пуҫне кӑларса:

— Хушнӑ вӑхӑтрах килтӗм. Атя, лар,—терӗ мана.

— Ларсан, ӑҫта кайӑпӑр вара? — „шиклӗ шикленнӗ, кӗрӗк арки пӗркеннӗ" тенӗ сын сассипе ыйтрӑм унран.

Шофер ман ҫине кӑнн пӑхрӗ.

— Сана лартса кайма ара... мана начальство хушнӑ. Хушамату мӗнлеччӗ?

Эпӗ хушамата, пӗр саспалли пытармасӑр, каласа патӑм.

Ёлӗк туй ачисем: „Атте ятне каласан, пире такам та хӗр парӗ, хамӑр ята каласан, качака та сутас ҫук", тесе юрлатчӗҫ. Туй ачисен юрринчи пекех, хамӑн хушаматӑма каласан, мана шофер автомашинӑпа лартса каймарӗ.

Ман пата чирлӗ ҫынсем те сывалма пыраҫҫӗ. Хушамата каласан, чирӗсене пӑхтармасӑрах тухса утаҫҫӗ.

Хӑш чухне милиционерсем те кӗрсе тухаҫҫӗ. Хушамата каласан, мӗн ӗҫпе килнине каламасӑрах, тухса каяҫҫӗ.

Почтальонсем, кашни кун тенӗ пекех, нирӗн хапха умӗнчи почта ешчӗкне пире тивӗҫлӗ мар ҫырусем, журналсем, хаҫатсем, повесткӑсем хурса хӑвараҫҫӗ. Пӗр йӗкӗт хӗр шырама пычӗ.

Эсӗ каланӑ хушаматлӑ хӗр кунта пурӑнмасть,—тенине ӗненмерӗ.

— Эсӗ вӑл хӗрӗн ашшӗ пулас?—терӗ мана.—Хӗрне усӑлса ҫӳреме манпа яма хӑратӑн. Вӑл кунта пурӑннине ҫавӑнпах каласшӑн мар эсӗ,—тесе хӳчӗ.

Чӗнмен ҫӗртен маляр пырса пӳрт урайне сӑрласа хӑварасшӑн пулчӗ.

— Чӗнменрен мар, чӗннӗрен килтӗм,—тет хӑй.

Аптрамалла. Тепринче сехетсем юсакан мастер будильник сехет йӑтса пычӗ.

— Юсама патӑр та илме пымастӑр,—терӗ.

Юсанӑшӑн укҫа ыйтрӗ.

— Ай-уй! Хӑҫан сана эпир сехет юсама панӑ?

Хушаматӑма каласассӑн, тухса кайрӗ, сехетве хӑвармарӗ.

Хам килте пулман вӑхӑтра пӗр хӗрарӑм ик ачине йӑтса пынӑ.

— Ҫак ачасемшӗн упӑшку алимент тӳлемест,—тесе тӗлӗнтернӗ ман арӑма.

Хушамата илтсен, манран алимент шырас шухӑша пӑрахнӑ.

Хӑш чух рассыльнӑйсем телеграмма илсе пыраҫҫӗ. Хушамата каласан, телеграммӑна тыттарса та пӑхтармаҫҫӗ.

— Ман арӑм паян ача ҫуратса парасшӑн,— тесе пычӗ пӗр ирхине тепӗр ҫын.—Ҫак ҫуртра акушерка пурӑнать тенине илтсе килтӗм,—терӗ, ман арӑм ҫине ӗмӗтленсе пӑхса.

Хушаматӑмӑра каласан, тухса карӗ.

Пӗри пирӗн килкартине, хамӑр килте ҫук чух, пӗр лав вутӑ пушатса хӑварнӑ. Заказ

паман, укçа тӳлемен, кам илсе килнӗ? Каç пулттипе çынни пычӗ. Вутӑшӑн укçа ыйтать.

Хушамата каласан, укçа илмерӗ, пушатса хӑварнӑ вутта каялла илсе карӗ.

Кӑнтӑрла мар, çӗрле те канлӗх çук. Хапхаран шак-шак-шак! шаккаççӗ, шӑлтӑр-шалтӑр шалтӑртаттараççӗ, чӳречерен тӑк-тӑк-тӑк! тӑкӑртаттараççӗ. Уçса кӗртсен, хушамата каласан, ытлашши калаçса тӑмасӑрах тухса каяççӗ.

Пӗррехинче, çурçӗр иртни пӗр сехет тӗлӗнче, хапхаран шаккакан çынна уçса кӗртрӗмӗр.

— Эпӗ çывӑрма килтӗм,—терӗ пире.

— Сан хваттер ку çуртра мар, ырӑ юлташӑм,— терӗм сӗм ӳсӗр, ури çинче аран тайкаланса тӑракан çынна.

— Кунта маррине пӗлетӗп, — терӗ хайхи çын мана хирӗç кӑшкӑрса.—Мана юлташ ячӗ кунта, Кооператив урамӗнчи 1-мӗш номерлӗ çуртра пурӑнатӑп, çывӑрма пыр,—терӗ.

Пӳрте вӑйпах кӗрсе карӗ. Аппай! Тумтирӗсем пӑхмалла мар лапраланса пӗтнӗ. Малти стенана çурӑмӗпе тайӑнса вараласа пӗтерчӗ.

— Пӗрене çумне ан сӗвен-ха, юлташӑм!— терӗм хайхине.

— Çакӑнта выртатӑп та ирчченех çывӑратӑп,—тесе, урайне ним сармасӑрах лап сарӑлса выртрӗ. Аран кӑларса ятӑм.

Пароход çинчен аннисем пырса аптăратӑççĕ.

Эпир пураннӑ çуртра асӑннӑ хушаматлӑ этем çукки çинчен каласан, çаварĕсене карсах пӑрахаççĕ.

— Хӑй янӑ адресĕ тӑрӑх кунтах пулмалла-çке,—теççĕ.

— Апла пулсан, пирĕн урам вĕçĕнче ларакан çурта кайса пӑхӑр. Тем тесен те, çав çуртра пурӑнать вӑл, мĕншĕн тесен пĕрремĕш номерлĕ çурт пирĕн урамра иккĕ. Пĕри—пирĕн, тепри—лере, урам тепĕр вĕçĕнче ларать...

Хула советне кайса çурт номерне улӑштарса пама ыйтнӑ кун та, хамӑр чĕнмен тата чирлемен çертенех, пирĕн пата „васкавлӑ пулӑшу“ пырса карĕ.

Çурт номерне улӑштарнӑранпа никам та пырса аптратмасть, сире те çавнах сунатӑп.

## ЙĂЛАЙ ЙĂКĂНАЧĔ

Ĕлĕкрех туя-мĕне кайсан, Йăлай Йăкăначĕ „Вăлта хулли—пĕвĕм пур, авкаланать, хуçкаланать, туй илемне вăл кўрет“,—тесе юрлатчĕ, хăй кусĕнчен пĕтĕм халăха пăхтарса. Анчах, чылай авланнă хыççăн, Йăлай Йăкăначĕн пĕвĕ авкаланми пулчĕ; ĕлĕк туй илемне кўрнĕскер, колхоз илемне яракан пулса карĕ.

Колхоз йышĕ ывăнма пĕлмесĕр тырă вырать. Йăлай Йăкăначĕ ĕнтĕркесе çўрет. Келте кутне тăрсан та уй куçласа тăрать, кĕлтине çыхнă чухне те тем çинчен шухăшса кайса вăхăта ирттерет. Кăштах ĕçлесен, выртса канса илет. Тем амак пулнă?

Арăмĕ ăна:

— Мĕн ўрĕк-сўрĕк ĕçлетĕн?! Çынсем тар юхтарса ĕçлеççĕ,—эсĕ пур, пĕççўна тăратса выртатăн!—тесе вăрçать.

— Чирлерĕм, — тет Йăкăначĕ, пĕççине хыçса.

— Мӗнле чирпе?— ыйтаҫҫӗ колхозниксем.

— Рак чирӗпе,—тет Йӑкӑнат, ним шухӑшласа тӑмасӑр.—Хырӑма рак кӗрсе кайнӑ. Ой, ыратать! Чӗрем шартах татӑлса карӗ пулмалла. Ой!..—ҫӗленле авкаланнӑ пек пулать, пичӗ ҫине асап йӗрӗсем кӑларать.

— Йытӑ ҫитӗрех! Йӑкӑнатӑн чӗри сылтӑм енне куҫса ларнӑ. Сылтӑм енчен тытса кӑтартать,—тесе кулаҫҫӗ колхозниксем.

— Апла пулсан, чӗре мар, хӑмпу ыратать пулмалла. Мӗн ыратнине эпӗ ӑҫтан пӗлем?! Тухтӑр ӗҫне вӗренмен вӗт, — тесе ҫавӑрса хурать Йӑкӑнат, хулпуҫҫине пӑркаласа илсе.

— Эх, юлташ, питех те пысӑк ӗҫсем пулса иртеҫҫӗ пирӗн уй-хирте! „Ҫӗнӗ вӑй" колхоз пире социализмлӑ ӑмӑртӑва чӗннӗ. Эсӗ ӳрӗк-сӳрӗккӗн ӗҫлесех вӑхӑта ирттерсе ярасшӑн.

Йӑлай Йӑкӑначӗ ӳкӗте кӗмест.

Ирхине те кӗтӳсем тухсан тин сӗтӗрӗнсе тухать.

Ҫу каҫипе те халӑхпа тан пӗре кӑна тухрӗ. Ун чухне те ҫанҫурӑмне пин те икҫӗр аллӑ пӑрҫа ерсе сырӑннӑ этем евӗрех хыҫкаланса тухрӗ те сӑмаха тӳрех персе ячӗ:

— Паян ӗҫлеме кирлӗ мар, юлташсем! — терӗ.—Ӗҫлесессӗн те усси пулас ҫук.

— Ма усси пулас ҫук?—тӗлӗнсе ыйтаҫҫӗ колхозниксем.

— Манӑн сӑнани пур. Кунта килнӗ чухне качака ман ҫинелле пӑхса сухалӗсене темиҫе хутчен силлесе тӑчӗ. Ун пеккине курсан, ӗҫлеме кайиччен кайманни усӑллӑрах пулать. Тата иртнӗ каҫхине, ҫывӑрнӑ чухне, сылтӑм хӑлхана пӑрҫа кӗрсе кайнӑ. Шыв ярса аран кӑлартӑм. Ку ҫумӑр пуласса систерет,— тесе ӗнентерме хӑтланать.

Тӑп-тӑрӑ пӗлӗт тӳпи янках уҫӑ выртать. Вӑл ҫумӑр пуласса ӗмӗтленет.

— Лаша кӗҫенсен... калаймарӑм... лаша кӗҫеннӗ чухне хӳрине виҫӗ хутчен пӑрса илсен, ҫав кун кӑнтӑрлапа ҫумӑр пулать,— тет Йӑкӑнат малалла, ӗненмеллерех пултӑр тесе.

Колхоз лашисем пӗр-пӗрне палласа кӗҫенсе илчӗҫ. Вӑл—ҫумӑр пуласса сиснипе, тет. Эх, тӑварламасӑрах пӗҫерсе тунӑ ухмах,— калаҫма вӑтанасчӗ хуть, йытӑ пичӗн!

Ӗҫлеме „аюк" тенӗскер, кӗсел ҫиме сӗтел хушшине арӑмӗнчен малтанах кӗрсе ларать.

Ҫуркунне умӗн Йӑкӑнат арӑмӗ упӑшкине, кӑмака ҫинче выртнипех ҫӑкӑр пулманнине систерес шутпа, ҫуркун ҫӑкӑр памасӑр усраса пӑхнӑ.

— Мӗн тума сана ҫӑкӑр ҫитерес? Кӑҫал та эсӗ ӗҫлемесӗрех пурӑнасшӑн. Сан пек кахал упӑшка мана кирлӗ мар. Тухса кай, ӗҫлемесӗрех ҫитерекенне шырама!—урине тапсах вӑрҫнӑ Кулине.

Ларсан-ларсан, Йăкăнат кĕпе-йĕм çăвакан арăмĕ патне метр çурăллă пусăмсемпе утса пырать. Питĕнче хастарлăх палăрать:

— Арăм! Паян та çăкăр памасан, эпĕ çакăнса вилессĕн туйăнмасть-и сана?

— Çăкăр? Акă парам сана турчкапа çăкăр!

— Мана мĕн! Тăлăха юлатăн,— тет Йăкăнат, сассине антарса.

— Вилсен, пытаратпăр. Тупăку çине ларса сăра ĕçетпĕр,—тăрăхлать Кулине.

Йăкăнат пĕр шăлçурри те чĕнмест. Кăмака кĕтесси çумне çурăмне сĕвентерсе, чылайччен хыçкаланса тăнă хыççăн, çăпала пек чĕлĕмне тивертсе мăкăрлантарма тытăнать.

Арăмĕ, килкартинелле пăхса, шухăша кайса тăрать. Йăкăнат, ун патне хыçалтан кушак пек утса пырса, ăна—хоп! ыталаса илет те кулса ярать.

— Кулине чунăм! Сана темрен те ытларах юрататăп. Сана юратнипе хăнкăла çурăкне те кĕрсе кайма хатĕр.

— Ай-яй! Хăлынь-çке эс! Санпа калаçма нумай ăс кирлĕ. Тьфу, упăшка-и эс, ĕçлемесĕрех апат çиесшĕн антратса çӳретĕн!— терĕ Кулине, чалăшрах куçĕсене хаяррăн хĕссе.

Йăкăнат кровать çине ярт! тăсăлса выртрĕ.

Выртнă хушăра ăна ача чухне выляса çӳренисем аса килеççĕ. Выляса çӳретчĕ-çӳретчĕ те ун чухне, амăшĕ патне чупса пырса:

— Анне, ҫăкăр пар-ха! Касса пар ӗнтӗ, тетӗп,—тесе амăшӗн кӗпи аркинчен ачашшăн туртăнатчӗ.

Амăшӗ ним сăмахсăрах ҫăкăр касса паратчӗ, хăш чухне хытă чăкăт татăкӗ тыттаратчӗ.

— Анне, анне!—тет Йăкăнат, ӗлӗк хăй амăшӗ хыҫҫăн чупнине аса илсе.

Йăкăнат „анне" тесе кăшкăрса янинчен арăмӗ ахăлтатса кулса ярать. Унтан, кăпăк ҫыпăҫса тулнă сылтăм аллине курите ҫине тытса силлесе илчӗ те:

— Ухмаха ерме пуҫланă пулсан, ҫитерем эппин, пӗррелӗхе сана,— терӗ вăл ҫемҫелнӗ кăмăлпа.—Анчах, ҫинӗ хыҫҫăнах ӗҫлеме каймă пултăр!

Пӗр чашăк ҫăра турăх тăраниччен ҫимелӗх лартса пачӗ.

Упăшки ҫисе тăрансан, арăмӗ, ун ҫине хăйӗн ӗҫпе ӗшеннӗ аллине хурса, лăпкăн кăна ыйтса пăхрӗ:

— Каятăн-и ӗҫлеме?

Йăкăнат чӗнмерӗ, урай тăрăх йăраланса утса, кровать ҫине пырса выртрӗ.

* * *

— Эпӗ сан Йăкăнатна кӗҫех кахал чирӗнчен сыватса ярăп,—тесе хучӗ комсомол секретарӗ колхоз правленине пынă Кулинене.— Ăна мӗнле сиплемеллине пӗлетӗп. Савăла

савăлпах шаккаса кăларaççĕ. Эсир пулăшăр çеç мана. Юрать-и?—Вăл Кулинепе колхозниксене хăй Йăкăната мĕнле майпа сиплеме шухăш тытнине уçса пачĕ.

Тепĕр кунне Кулине вăрмана ирех ĕçлеме тухса кайнине сисмесĕр юлнă Йăкăнат арăмĕ ăçта кайнине пĕлме колхоз правленине пырса бригадиртан ыйтать. Бригадир, питĕ тутлăн карăнса илсе, калать:

— Çуркунне умĕн пĕтĕмпех кахалланса карăм. Арăму ăçта кайнине калама та ўркенетĕп. Майран пуссан та калаймăп,—тет.

Йăкăнат, сĕкĕшекен вăкăр пек, куçшуррисене кăларать те:

— Эй, мур илмен япала!—тесе, чашкăрса тухса каять.

Киле май Чĕкеç инке патне кĕчĕ.

— Çăкăр пиçни çук. Пĕр çур çăкăр кивçен памăр-ши тесе килтĕм те,—терĕ йăваш сассипе.

Чĕкеç инке пĕр шăлçурри те чĕнменнине кура, Йăкăнат хăйĕн сăмахĕсене тепĕр хут каласа пăхать.

— Кахалланса карăм. Çăкăр касса пама та ўркенетĕп,—терĕ Чĕкеç инке, тăрăхла сак çине юлхавлăн пырса ларса.—Çăкăрĕ чăлантаччĕ, ан çиленех, касса параймăп, ўркев пусрĕ.

Йăкăнат сăн-пичĕ хĕрлĕ тăм тĕсĕленсе ларчĕ. Вăл килне хытă тарăхса таврăнчĕ.

— Ҫăнăхĕ пур, вут хутса квас йĕкерчи пĕҫерсе ҫиес,—тесе, вут-шанкă йăтма тухрĕ.

Ҫурнă вутти пĕтнĕ-мĕн. Вутă татма ҫын кирлĕ. Петĕр тусĕ патне, пĕре хутмалăх та пулин, вут татма чĕнме утрĕ.

— Пыма ўркенетĕп,—терĕ Йăкăната Петĕр тусĕ, хыҫкаланнă пек туса.

Урамра Лука-кумне тĕл пулса:

— Сывă-и?—терĕ, калпакне илсе.

— Калама ўркенетĕп,—тавăрса хучĕ Лука.

Йăкăнат, арăмĕ тавăрăнасса кĕтсе, пĕр кун пурăнчĕ, икĕ кун пурăнчĕ. Вăл мĕн те пулин ыйтсан, колхозниксем, пурте ўркенни ҫине персе, нимĕн те каламаҫҫĕ.

— Табак пĕтсе ҫитрĕ. Турттар-ха!—ыйтать Йăкăнат урампа иртсе пыракан яка тумланнă йĕкĕтрен.

— Кăларма ўркенетĕп,—тавăрать йĕкĕчĕ.

Йăкăнат Хветĕр патне сĕтĕрĕнсе ҫитет.

— Иртеннех темскер ҫитмен пек йĕкĕлтесе тăрать: ĕҫес килет тесен, ĕҫес килмест, тем ҫитмест? Пĕрер чĕлĕм туртса ярсан, вăл-ку лăштах пулаканччĕ. Пĕр чĕлĕмлĕх табак пар-ха,—тесе йăлăнать вăл.

— Йăлтах кахалланса ҫитрĕм,—тет Хветĕр.—Табак арчараччĕ. Арча уҫса илме кахал пусрĕ.

Лавкари продавец та табак пама ыйтнине хирĕҫ киленўллĕн карăнса илет те:

— Кахал пусрĕ. Параймастăп пулĕ,—тет. Йăкăнат кун çинчен жалоба кĕнеки çине паллă туса хăварать.

Пур çĕрте те вăл пĕр пек ответ илет.

Эрнерен, арăмĕ таварăнсан, Йăкăнат савăннипе каççах каять, анчах арăмĕ киле таварăннă-таварăнман, канма тесе, кровать çине кайса выртать.

— Ăçта пултăн? Сана кĕтсе халăм юлмарĕ,—ыйтать Йăкăнат.

— Кайран каласа парăп. Ĕçлесе ĕшеннĕ пирки халĕ çăвар уçма та ўркенетĕп,—тет арăмĕ, ыйăх пуснă çын пек тутлăн анасласа илсе.

— Каçхи апат пĕçерместĕн-им?

— Кахал пусрĕ. Пĕçерес килмест.

Тепĕр кунне те Кулине, кахал пусни çине персе, килĕнче нимĕн те тумасть. Çăкăр пĕçерсе пама ыйтнине хирĕç: ху пĕçер, мана кахал пусрĕ, тет.

Çапла çирĕм кун ытла пурăнса пĕтĕмпех муталанса пĕтрĕ хайхи Йăкăнат.

— Çăва патне!—терĕ вăл юлашкинчен.— Ўркенме пуçĕпех пăрахатăп: ĕçчен колхозник пулатăп. Ара ăçта килнĕ унта ман питĕме пĕçертме тăрăшаççĕ. Кайри—мала тухĕ!—терĕ те бригадир патне ĕç ыйтма утрĕ.

Çак самантра Кулинен пичĕ тăрăх савăнăç куççулĕ юхса аннине никам та курмарĕ.

# ПЫЛЛӐ ЧӖЛХЕ

Ҫывӑрас тесе куҫне хупсан та, Семен Петровича шухӑшӗсем ҫывӑрттармаҫҫӗ. Юнашар кровать ҫинче тутлӑн ҫывӑракан Макар Макарча вӑратас мар тесе, сывлӑш ҫавӑрма шикленсе выртнӑ хушӑра, Семен Петрович пыршӑтӑкӗ кӑтӑкланнипе—кхм! кхм! ӳсӗркелесе илет.

— Тухтӑр чӗлӗм туртма пӑрахма хушрӗ. Бронхит...

Семен Петрович, табак туртма виҫӗ ҫул ӗлӗк мӗнле майпа тытӑнса кайнине аса илсе, лаш! хуйхӑрса ярать. Табак туртма тытӑнасси ҫапла пулнӑччӗ.

Ҫӗнӗ пуҫлӑх килмелле тенӗ хыпар Семен Петровича тӗрлӗ майлӑ та шухӑшлаттарнӑччӗ.

„Киввин ӑсне-йӑлине пӗлсе ҫитернӗ хушӑра ҫӗнни килсе кӗрсен, юрама мӗнле пӗлес?"

Ҫӗнни вунпӗр сехете ҫирӗм минут кайнӑ вӑхӑтра пырса кӗрсе, служащисемпе здоровӑ

туса, сĕтелĕ хушшине ларсан, Семен Петрович учреждениri ĕçсем мĕнле пыни çинчен ăна кĕске рапорт панăччĕ. Рапорт панă чухне ахальрен кăна çапла каланăччĕ:

— Халĕ, çитменлĕхсем кăштах пулсассăн та, эсир тĕреклĕ ертсе пынипе, пĕр эрнерех чи малта пыракан учреждени пулса тăма пултарăпăр,—тенĕччĕ.

Пуçлăх, сăрантан тунă портсигарне туртса кăларса, Семен Петровича:

— Тархасшăн!.. Именсе ан тăрăр... Туртса ярăр... Табак туртнă чухне пуç аванрах шухăшлать,—тенĕччĕ.

Семен Петрович, хăй табак туртманни çинчен калама хăяйман пирки, пĕр пирусне çавăн чухне илнĕччĕ. Пĕр-икĕ çăвар ĕмсе пăхнă хыççăн унăн пуçĕ, анра сурăханни пек, çаврăнса кайнăччĕ.

Кайран, хутсем çине алпустарма кĕрсен, пуçлăх ăна каллех тепĕр пирус илме сĕннĕччĕ. Çапла вăл пĕр кунтах, заняти пĕтиччен, пĕтĕмпе вунпĕр пирус пуçлăханне туртнăччĕ.

Çав кунах, хваттере таврăнсан, Семен Петрович çурçĕр иртни пĕр сехет çитичченех пирус туртас тĕлĕшпе çĕнтерӳсем тумалли упражненисем тăва-тăва ирттернĕччĕ.

Тепĕр кунне пуçлăха вăл хăй пирус панăччĕ. Çавăнтан вара, табак туртас искусствăна пĕтĕмпех çаврса илсе... çăвара хыпнăччĕ.

Анчах... çĕнĕ пуçлăх ертсе пынипе çĕнĕ çĕнтерӳсем тума пурте хатĕр чух, çуни Хусанта, хăмăчĕ пасарта чухне, пуçлăха кăларса яраççĕ.

Кивви кайнă çĕре çĕнни алăк хыçĕнче тăрать, тесçĕ. Семен Петрович çĕнĕ пуçлăха мĕнле сăмахсемпе йышăнса илмелли çинчен шухăшласа хытнă вăхăтра каллех çĕнни пырать кĕрет.

— Малашне сирĕн пуçлăхăр эпĕ пулатăп!— тет те вăл, пурне те алă парса тухать.

— Пит хавас!—тет вĕр-çĕнĕ пуçлăха Семен Петрович, ун патне кăшт кăна хутланарах утса пырса.—Халиччен секретарь эпĕ пулнăччĕ. Малашне те, сирĕн вĕçĕмсĕр кăмăлăра кура, эпех пуласса шанма... Юлташсем, форточка хупăр! Хамшăн каламастăп, пирĕн пахаран та паха пуçлăх, форточка витĕр сивĕ кĕнипе, ангинăпа чирлеме пултарать. Пирĕн вара, пуçлăхăн паха сывлăхне çухатнăшăн, пĕтĕм сарлака массăсем умĕнче намăса тухмалла ан пултăрччĕ.

Çакăн хыççăн Семен Петрович, унчченхи пуçлăх ĕç тума тытăниччен пирус туртас пулать тенине аса илсе, пирус кăларса хыпать.

Пуçлăх Семен Петрович çинелле чăрр! пăхса илет те çапла калать:

— Табак — никотин. Никотин—яд. Сиенлĕ япала. Манăн шухăшпа, камăн ӳпки табак

тĕтĕмне йытă патака юратнă пек юрататъ,— çавсем çеç туртаççĕ. Тата кам, социаллă, коллективлă пурнăçăн йĕркисене лайăх ăнланман пирки, хăй тавра ларакансен сывлăхĕсемшĕн тăрăшма пĕлмест, кам сывламалли сывлăша йĕрĕнчĕклĕ ядсемпе сиенлеме хăтланать, çавă çеç табака пўлĕмре туртать...

Çакна илтсен, Семен Петрович, чĕкĕнтĕр пек хĕрелсе кайса, халĕ çеç пуçланă пирус пачкине çўп-çап корзинкине ыткăнтарать.

— Эпĕ вылямалла кăна... Хутран-ситрен турткаланă... Малалла нихăçан та çавара хыпса курас çук,—тет вăл.

Ку пуçлăха ултă уйăхран тата аслăрах вырăна ĕçлеме куçараççĕ. Унăн вырăнне çĕнĕ пуçлăх килет. Вăл, служащисемпе паллашнă кунах, хăй табак туртма фронтра вĕренни çинчен каласа парать те, юлашкинчен:

— Ман пўлĕмре туртма ан именĕр. Эпĕ служащисем манпа килти пек тытнине юрататăп,—тесе хушса хурать.

Çакна илтсен, Семен Петрович каллех пирус туртма вĕренсе, бронхита ерет.

Чылайран ку пуçлăх та Семен Петровичсем патĕнчен урăх вырăна куçать. Татах çĕнĕ пуçлăх.

Çĕнни килсен, служащисене тўрех пĕлтерет:

— Манăн пўлĕмре ан туртăр. Туртас килсен, коридора тухăр,—тет.

— Эпир пурте туртман ҫынсем,—тет Семен Петрович, ҫӗнӗ пуҫлӑх куҫӗнчен ачашланса ларакан мӑр-мӑр кушакла пӑхса.

— Апла аванрах,—тет ҫӗнӗ пуҫлӑх.

Ку пуҫлӑхпа Семен Петрович пилӗк уйӑх хушши табак туртмасть.

Пилӗк уйӑхран пӗр ирхине каллех тап-таса ҫӗнӗ пуҫлӑх пырса кӗрет. Кӑштах каласса ларсан, вӑл Семен Петровича тӳрех:

— Ах, инкек, пирус килех тӑрса юлнӑ. Санӑн ҫук-ши?—тесе ыйтать.

— Халех, халех! Аялти тумтир ҫакмалли пӳлӗмре, пальто кӗсъинче. Халех илсе килетӗп.

Семен Петрович, аяла чупса анса, буфетран пӗр пачкӑ хаклӑ йышши пирус туянса таварӑнать те ҫавӑнтан вара паянхи кунччен чӗлӗм туртакансен ретӗнче тӑрать. Бронхит! Ӳсӗрет хӑй...

Акӑ халӗ, пуҫлӑхпа юнашар ларакан кровать ҫинче выртнӑ чухне те, час-часах ҫӑварне аллипе хупласа тытса ӳсӗре-ӳсӗре илет.

Семен Петрович ыйха кайма тӑрмашать, анчах ҫывӑраймасть. Пӗр енчен тепӗр енне ҫаварӑна-ҫаварӑна йӑшаланса выртать. Сылтӑм аллине ҫытар ҫийӗн пуҫ айне хурса, сулахай аллипе питне хупласа, самантлӑха ним шухӑшламасӑр выртасшӑн ҫунать, анчах,

усал шăна пек, шухăшсем, хăваласан та, уйăрăлса каясшăн мар. „Эпĕ йăпăлти çын. Авал мана атте çапла вĕрентетчĕ: çынсене хирĕç пулсан, пĕрмаях пуçа тайса ирт, уншăн пуç таталса ӳкес çук. Çынни вăл тепĕр сехетре кирлĕ пулма пултарать, тетчĕ. Çавăнпа, хама хирĕç пуçлăх утса килнине курсан, ман питкуççем шыв çинчи çу тумламĕ сарăлса выляна пек курăнаççĕ. Эпĕ аслăрах çын умĕнче қалтăрмач пек йăпăлтататăп... Ах, ку ӳслĕк! Ехм-ехм!.. Пуçлăха ан вăраттăр. Тĕрĕссипе илсен, курăймастăп эпĕ çак этеме. Эпĕ ун пирки бронхита ернĕ. Унпа сахал-ха, иртнĕ эрнере вăл мана ĕçрен кăларса ярассипе хăратса пăрахрĕ. Санăн чĕлхӳ пуклак, ĕçпе килнĕ çынсемпе калаçма пĕлместĕн, тесе хучĕ. Ы-ых!.. Ак пĕре майăнтан тытса пĕтĕм вайран силлеме тытăнсан, вырăнтан кăларассипе хăратма пăрахăттăн!"—тет Семен Петрович, юнашар кровать çинче выртакана чышкăпала юнаса. Анчах çавăнтах вăл, темрен хăрана пек пулса, сасартăк кăрт сиксе илчĕ.

Ку самантра Семен Петрович виçĕм кун каçхине курнă тĕлĕке аса илет. Макар Макарча усал сăмахсем каласа вăрçнăччĕ вăл ун чухне курнă тĕлĕкре. Кĕçĕр те çавăн пек тĕлĕк курсан, Макар Макарч тĕлĕкре хăйне вăрçнине илтсен, „ăсан хыççăн вĕçекен чăх-

хӑн пӗсехи ҫурӑлнӑ“ тенӗ пекех,—пӗсехем ҫурӑлать вара. Тӗлӗкре кама вӑрҫнине пуҫлӑх ӑнланасран мӗнле хӑтӑлас? Чӗлхен шӑмӑ ҫук, теҫҫӗ. Мӗнле шӑмӑллӑ тӑвас? А, тупрӑм. Пиншак тӳмми шӑмӑллӑ. Ҫав шӑмӑллӑ тӳммене касса илетӗп те чӗлхепе ҫӑвар маччи хушшине хурса выртатӑп. Апла тусан, Макар Макарча тӗлӗкре вӑрҫсан та, вӑл эпӗ мӗнле сӑмахсем каласа кама вӑрҫнине ӑнланма пултараймӗ.

Шухӑшланине тӑвать. Тӗттӗмре хыпаласа пиншакне тупать, унӑн тӳммине ҫӗҫӗпе татса илет те ӑна чӗлхипе ҫӑвар маччи хушшине хурса вырнаҫтарать.

— Капла тусан, ыйхӑра тухас сӑмаха чӗлпӗрлетӗп. Ҫӗр тикӗс иртӗ,—терӗ те Семен Петрович, ҫемҫе одеял айне чӑмрӗ.

* * *

Ирхине пуҫлӑх Семен Петровичран малтан вӑраннӑ. Макар Макарч ботинка тӑхӑннине илтсен, Семен Петрович та вырӑн ҫинчен вӑр-вар сиксе тӑрать; хайхи ҫӑвар маччипе чӗлхе хушшине хунӑ тӳмме ҫинчен аса илсен, вӑл пӗр самантлӑха уй тункати пек хытса ларать. Ара, шанӑҫ панӑ тӳмме вӑл ҫывӑрнӑ вӑхӑтра ҫӑвартан тухса ӳкнӗ мӗн!

— Мӗн темскерле пултӑн?—ыйтать пуҫлӑх.

— Нимех те мар... Тӗлӗкре сана халӑх комиссарӗ пулса ӗҫленине куртӑм, — тет

хăйĕн „кĕреçе мар“ чĕлхине пыллантарса, çемçетсе.

— Паян ĕçĕмĕрсене пĕтерсе каçхи поездпа ларса кайсан аванччĕ. Мĕнле сан шухăшупа, ĕлкĕрме пулĕ-ши?

— Пулмасăр. Растрата çук, Макар Макарович! Приход-расходсене тĕрĕс çырса пынă. Ман ĕç пĕр сехетрен пĕтет. Сирĕн темле? А çав тĕлĕк çинченех шухăшлатăп-ха. Мĕнле курăнма пĕлчĕ-ха ун пек тĕлĕк? Ку тĕлĕк эсир аслăрах вырăна куçасса systerмест-ши?

— Апла куртăн пулсан, санăн куç-пуçу тĕлĕкре кăнтăрлахи пекех витĕр мар,—тесе хучĕ те пуçлăх, алшăллине супăнь илсе питкуçне çума коридора тухрĕ.

Макар Макарчăн вырăнне пуçтарса йĕркеленĕ май, Семен Петрович сăмса айĕн мăкăртатрĕ.

— Каллех капла каласа кӳрентерчĕ. Хăçан урăх вырăна куçса кайăн-ши? Унччен чăтас пулать. Чĕлхере пыл пулсан, чĕрере пăр пуррине сисеймĕн,—терĕ те вăл, хăй мăкăртатнă хушăрах, куçĕсемпе пуçлăхăн портфелĕ çине сиввĕн пăхса илчĕ.

## ХУТ ХУТАÇ

Çурçĕр иртни виç сехет çапсан та çывăрса кайман кĕçĕр Митрофан Иванович Салмин. Ăшĕ, çулăмсăр çунакан кăмпа пек, çунать унăн паян.

Калас пулать, унăн учрежденире пĕрле ĕçлесе ларакан юлташĕ, Михаил Петрович Половинин текенни, заняти пĕтес умĕн хаçат вуласа ларнă хушăра:

— Семипалатинск чипер хула-и?—тесе ыйтнă ăнсăртран.

Половинин çăварĕнчен çак ыйту тухасса Митрофан Иванович нихăçан та ĕмĕтленмен. Çанçурăмĕ сӳ туса кайнă ун, сăн-пичĕ пĕрре хĕрелсе, тепре шуралса илнĕ, чĕри тĕпсĕр шырлана ӳкнĕн туйăннă.

— Унта пулман эпĕ!—урмăшнă сасăпа таварса панă Митрофан Иванович.

Калаçу çавăнтах пĕтнĕ пулин те, çак ыйту Митрофан Иванович пуçĕнчен тухма пĕлмен. Халь те, çемçе тӳшек çинчи ăшă одеял

айёнче ыйăх килмен пирки йăшаланса выртнă хушăра, тем ырра мар систерекен сасă:

— Семипалатинск чипер хула-и?—тесе такам хăрушă сасăпа ыйтнăн туйăнать ăна.

„Хам Семипалатинскра пулнине эпĕ никама та каламанччĕ. Семипалатинскран эпĕ ухмах пуçпа растрата туса тарни çинчен илтмен пулсан, Половинин Семипалатинск çинчен ыйтас çукчĕ. Пĕтерет вăл мана! Ун çамки çине „халăх тăшманĕ" тенĕ хура клеме çапса яма вăхăтра ĕлкĕреймесен,—пĕтет кунти вырăнăм, пĕтет ятăм та..."

Витĕнмеллине хăй çинчен карт сирсе хурса, хăпăл-хапăл сиксе тăрать Салмин. Кăçатне вăшăл-вашăл тăхăнса ярса, кабинетра ларакан сĕтелĕ хушшине йăпăр-япăр кĕрсе ларать. Çырма тытăнать. Виç сăмахран ытла çыраймасть, ручкине лаштах пăрахать.

Шухăшĕсене пухса, тапранмасăр ларса та пăхрĕ, махорка та, пирус та туртса пăхрĕ, пуçне сĕтел çине хурса та, сĕвенсе ларса та, чавсаланса ларса та пăхрĕ, Половинин çинчен йывăр айăп тупайманшăн тарăхнипе хăйĕн мăнă сăмсине чышкă кăтартса та пăхрĕ, анчах çук, айăпĕ çав-çавах тупăнмарĕ.

Сехет тăваттă çапни илтĕнсен, айăп тупас ĕмĕт хутаççи çурăлса анать унăн. Вара, йăраланса, каллех сывăрма кайса выртать вăл.

* * *

Тепĕр ир те çав маях. Упăшки сывăрнă хушăра, арăмĕ вут хутса шĕл кăвар синче çатма куклисем пĕçернĕ, çутă сăмаварĕ сĕтел çинчех кăвак пăс кăларса ларать; тулта хĕвел çутти йăлкăшса пăхсан—мĕнле чĕрчун савăнмĕ темелле, анчах Митрофан Иванович ăшĕнче Семипалатинск хули çав-çавах чул пек йывăррăн тăрать.

Пĕрене çумне çапнă численник листине татса илнĕ хушăра пат пĕр шухăш пырса кĕрет ăна. Çав шухăш хушнипе, вăр-вар тумланать те хăпăл-хапăл тухса вĕçет.

— Митоша! Çырткаласа каймаллаччĕ кăштах!—хыçалтан кăшкăрса юлать арăмĕ.

Митоша, читлĕхрен вĕçерĕннĕ кайăк пек, урампа вĕçтерсе каять. Кĕнеке магазинне кĕрет. Чек çыракан куç тулли хĕрарăма çулпуçĕсен портречĕсене илсе пама калать. Пилĕк портретшăн укçа тӳлесе магазинран тухнă чухне, Пантелеев хушаматлă паллатăрана хирĕç пулать.

Пантелеева паян-ыранах партирен кăларса ярас сасă пур.

Курнă куçа курми тăвать.

Урам кĕтессинче ватă карчăк мăйăр сутса тăрать. Вăл ытларах илекенсем валли хутран çыпăçтарса хутаççем туса килнĕ. Мăйăрĕ аван пулас.

Пилĕк стакан виççе хутаça ярса пама хушать Митрофан Иванович.

Киле таврăнсан вĕри кукăль сивĕнме тытăнни çинчен арăмĕ мăкăртатнине итлемест, кнопка коробкине кăларса, хăй илсе килнĕ портретсене пĕрене çумне çапа-çапа ярать. Унтан тин вара кукăль çиме ларать. Кукăль çыртăмĕсем чăмланă-чăмламан йăнкăл-янкăл анса каяççĕ.

Çисе-ĕçсе тăраннă хыççăн, хай илнĕ мăйрине тирĕк çине силлесе тăкать Митрофан Иванович. Хутран тунă хутаçĕ çине ĕç çукран пăхкаласа ларать.

Унăн шал енне машинкăпа çапса тухнă сăмахсене вуласан, юнсăх пичĕ ялкăшакан пулса каять.

Акă мĕн çырнă, имĕш, унта:

„3-мĕш рота прапорщикне, Михаил Петрович Половинина, хĕрлисене хирĕç паттăррăн çапăçнăшăн поручик чинне парса, рота командирне кĕртес".

Митрофан Ивановичăн çунса кĕтсе тăнă ĕмĕчĕ çитрĕ. Хисеплĕ Половинин айăпĕ аран-аранах тупăнчĕ. Пĕтĕм тĕнче çутă кĕрен тĕслĕн ялкăшакан пулса тăчĕ, чĕри хĕпĕртесе тапа пуçларĕ, пуç кукши тĕлĕнчи тирне ăшă çапрĕ.

— Э-хэ-хэ, лекрĕн-и?

Иртнĕ каç хайхи хăйне мутталантарса пĕтерне заявление вун-вунпилĕк минутранах картлаттарса тухса, айне „Салмин“ тесе ал пусса та хурать.

* * *

Çырса пĕтерсен, хайхи хут хутаçа, каллех алла тытса, тулли кăмăллăн пăхкаласа ларма тытăнать.

— Пăхсан ним те мар çакă. Анчах Половинин шанăççăра ÿкесси, парти билетне çухатасси, халăх умĕнче намăса тухасси çак хутаçра. Ку жалобăна хам сыхăлăхшăн тăрăшнине палăртма пулать. Çырнă хута кирлĕ çĕре ыранах кайса парасчĕ-ха. Вара аван пулать.

Унччен те пулмасть, Митрофан Ивановичăн сăнĕ шуралса карĕ, тута хĕррисем чĕтреме тытăнчĕç, пуç кукши тĕлĕнчи тирне сивĕ çапрĕ.

— Па! Половицин? Прапорщик Половицин пулнă!.. Половинин мар... Ку „Ц“ саспалли... хăямачĕ... палăрсах каймасть-мĕн... эпĕ ăна „Н“ тенĕ те, „Ц“ пулнă. Пурнăçу-масару,— пĕтĕмпех кутăна карĕ, йĕп çинчискер! Тьфу!—терĕ вăл, çырнă хутне çĕтсе тăкса.

## КУКАМАЙ ÇЫВĂРМАСТЬ

Çурçĕр иртни виçĕ сехет. Карчăк çывăрмасть. Ыйăхĕ тарнă. Пăхса выртать. Кинĕсемпе ачин ачисем ыйха туртаççĕ кăна. Ыйха вĕçтерес марччĕ, нушаланмалла ан пултăрччĕ тесе, пуçне пырса кĕрекен шухăшсене карчăк веçех хăваласа яма тăрăшать. Анчах шухăшĕсем карчăка итлесшĕн мар, карчăкран ыйтмасăрах пуçа кĕрсе, ăна муталантараççĕ. Нумай шухăш—çитмĕл пилĕк çулхи карчăк пуçĕнче. Ун умне иртнĕ кунсем пĕрин хыççăн тепри туха-туха тăраççĕ: нумай çул хушши Сахрун хуçа патĕнче тарçăра муталанса пурăннисем, кăмăл туртман çынна качча тухнă кунсем, ача-пăча çуралнăшăн тарăхнисем, революци пуçлансан ялта мĕнмĕн пулнисем...

— Тертленсе пурăннă çав. Халĕ телейлĕ, ăшă пурнăç килчĕ. Ватлăхра канлĕх тупрăм. Малалла курас савăнăçсен вĕçĕ çук. Кăçалах вилес марччĕ. Ватă-çке, çамрăк мар-çке. Ватах мар пулсан, эпĕ те çамрăксенчен юлас çукчĕ. Ав, çитес уяв ячĕпе çĕршыв валли пурте парнесем хатĕрлерĕç. Эпĕ, ватă пир-

ки, ним те хатĕрлеймерĕм. Куç витĕр мар, ал-урам тĕреклĕ мар. Çитменне халсăр пултăм.

Кинĕ вăранать. Карчăк сывăрмасăр йăшăлтатса выртнине илтсен, вăл ун патне вырăн çинчен тăрса пырсах ыйтать:

— Ма сывăрмастăн, аннем? Ыратни сывăрттармасть-им?

— Ăш вăркать. Пĕр шухăш пуçран тухма пĕлмест...

— Мĕнле шухăш, аннем?

— Çĕршыв валли парне хатĕрлеймерĕм. Пурте хатĕрлерĕç. Ав эсĕ те ПВХО нормине парса татрăн. Эпĕ те парса тататтăм та, анчах халсăр пулни чарчĕ...

Кинĕ ăшшăн кулса ячĕ.

— Çĕршыва парнесем панă-çке эсĕ, аннем! Селĕм парнесемех,—тет.—Ав, аслă ывăлу—производствăри паллă стахановец, вăталăххи—лейтенант, Хасан кӳлли патĕнче паттăр çапăçнăшăн орден çакма тивĕç илнĕ, кĕçĕнни—çар академинче пур предметсемпе те отлично вĕренсе пырать, Марье—паллă летчица. Шутсăр паха парнесем. Ун пек парнесем пама тивĕçлĕ пулсан, эпĕ тем пекех савăнăттăм... Лăпланса сывăрах, аннем,—тет те, ăна виçĕ хутчен пит ăшшăн кăна чуптуса илет.

Кинĕн ăшă сăмахĕсене илтсен, карчăк чунĕ лăшах пулать.

# ШЫРАКАН ТУПАЙМАРĔ

Лаши пит хытă вашлаттарса пырать. Кĕçех шурă юрпа витĕннĕ разъезд çурчĕсем курăнми пулчĕç. Çуркунне еннелле сулăннă çанталăк хитре, уяр тăрать. Çул яка. Марья Павловна, çурăмĕпе çуна хыçĕ çине тайăнса ларнăскер, сулăнчăксенче ӳксе юласран пăшăрханмасть, прислуга тупăнмасран пăшăрханса пырать. Хут пĕлмен, тĕттĕм, общество ĕçне хутшăнма кăмăлламан хĕрупраç тупса, хулана, хăй патне прислуга илсе каяссăн Марья Павловна инçе çула тухнă. Хуларан аякрарахри ялта ун пеккине тупасса шаннă вăл.

— Тупсан тем пекехчĕ,—шухăшласа пырать Марья Павловна.—Прислуга тени вăл— кăнтăрла та, каç та, ир те килтех лартăр, ниçта та ан тухтăр, „тухса çӳресем ĕнтĕ“ тесен те, уçăлса çӳресшĕн ан пултăр. Общество ĕçне хутшăнаканнине эпĕ виçĕ кун та тытса усрас çук,—пин хутчен те пуçра пулнă шухăшсемпе аппаланса пырать вăл.

Кӗҫех, лавҫапа Марья Павловна йывӑҫлӑ яла вашкӑнса кӗчӗҫ.

— Ҫитрӗмӗр... Кам патне кӗрес?—ыйтрӗ лавҫӑ, тилхепине хытӑрах тытса, лашине хӑй уттипе ярса.

— Кам патне кӗмелле-ши? Эсӗ пӗлмес-тӗн-и: сирӗн ялтан кам хӗрӗ хулана при-слугӑна пымалла пек?

Лавҫӑ шухӑша карӗ.

Ҫавӑнтах Марья Павловна пуҫне шутсӑр ӑслӑ шухӑш пырса кӗрет:

„Прислуга мар, ҫӑм арлакана шыракан пул-са ҫӳрес. Ахалӗн, тӳрех прислуга кирлӗ тесен, хама килӗшмен общественница тӗлне пулсан... пӗлмесӗр илсе те ярӑн. Малтан вӑл общественница маррине ытарлӑ ыйтса пӗлес пулать. Унсӑрӑн ӗҫ тухмӗ. Ҫӑм арлакана шыранӑ пек пулса ҫӳренине ним те ҫитмӗ", терӗ вӑл хӑй ӑшӗнче.

— Прислуга мар, ҫӑм арласа паракана шы-ратӑп эпӗ. Паҫӑр, разъездра юри апла кала-марӑм,—терӗ, ӑшшӑн кулса, Марья Павлов-на.—Ҫӑм арласа пама вӑхӑт тупакан хӗрсем мӗнле, тупӑнӗҫ-ши?..

— Арласа парӗҫ, ара! Ҫак пӳрте кӗрсе пӑх. Виҫӗ хӗр пурӑнаҫҫӗ унта. Амӑшӗ те ытлаш-ши ватах мар, ҫӑм арлама пултарать.

Марья Павловна ҫуна ҫинчен анса тӑчӗ, пӗчӗк сумкинчен пӗчӗкҫӗ аллипе хут укҫа

туртса кăларчĕ те чĕлĕм чĕртме тытăннă лавăҫа тыттарчĕ.

— Эсĕ каях!—терĕ ăна.—Спасибо лартса килнĕшĕн.

Сăмах ҫинех лавҫă кăтартнă килтен пĕр яштак хĕр утса тухать.

— Эй, хĕрĕм,—терĕ Марья Павловна.— Ман пĕр-икĕ кĕренке ҫăм пурччĕ. Арлаттарас теп. Мĕнле эсĕ...

— Вăхăт тупаймăп,—ăшшăн ответ пачĕ хĕр,—заочница пулса вăтам шкулта вĕренетĕп. Ҫураки умĕн колхозра та чылай ĕҫсем. Тата РОКК кружокĕ пур ман. Староста унта...

— Йăмăку пур пулас сан? Вăл мĕнле?..

— Вăл комсод енĕпе пикенсех ĕҫлеме тытăнчĕ. Кĕҫĕнни-и—хор кружокне кайнăччĕ те, хăйĕнчен ыйтмасăрах калама пĕлместĕп. Анне темле. Вăл арласа парĕ-и анчах, кĕрсе калаҫ... ҫук, вăл те ерҫес ҫук. Партин 18-мĕш съезчĕн материалĕсене пикенсех вĕренет. Пирĕнпе ăмăртать.

Марья Павловна пĕчĕк ҫăварне карсах пăрахрĕ. Акă сана хуларан инҫетри ял!

— Ав, Варвари ятлă хĕр шыв патне анать. Ҫавăнтан ыйтса пăхма пултаратăр. Тен арласа парĕ...

Хĕре чĕнсе илчĕҫ.

— Лайăх тӳлесен, арласа парăттăм та,— çăмĕ нумаях мар пулсан... анчах çак кунсенче авалхи мăнкун умĕнхи аслă типĕ çинчен доклад тума хатĕрленмелле-ха,—терĕ хĕр.

— Сан пекки кирлĕ мар,—шухăшларĕ Марья Павловна.—Килтен тухнă чухне пушша хирĕç пултăм пулас.

Кусем калаçса тăнă çĕре ватăрах хĕрарăм пырса тăчĕ.

— Çăм арлакана шырать çакă,—терĕç ăна.

— Ненай. Манран пулас çук. Ак, выльăхсене шăваратăп та клуба репетицине каятăп. Йăскар рольне пачĕç.

Килĕрен киле ял тăрăх çӳреме шухăш тытрĕ Марья Павловна.

Пĕр пӳрте кĕчĕ.

— Хĕрсем пур-и сирĕн?—ыйтрĕ вăл, сĕтел хушшинче тимлесех çырса ларакан галстук çакнă хĕрачаран.

— Пур,—терĕ хĕрача, хучĕ çинчен пуçне илсе.—Аппа пур.

— Ăçта вăл?

— Колхоз ĕçĕпе тухса карĕ. Бригадирта ĕçлет.

— Эсĕ мĕн тăватăн? — ахальтен ыйтрĕ Марья Павловна хĕрачаран.

— Эпĕ-и? Стена хаçачĕн редакторĕ... класра тухать... Ак çырса ларатăп.

— Аннӳ ăçта?

— ПВХО кружокне карĕ пулас. Значок туянасшăн. Пиччесем вăрманта ĕçлеççĕ. Атте кирлĕ мар пулĕ?

— Кирлĕ мар,—терĕ те, вĕлт тухса карĕ Марья Павловна.—Мĕнле капла?—пăшăрханать вăл.—Мана кирли çук!..

Тепĕр пӳрте кĕрсен:

— Ман килес! — терĕ, авалхи чăвашсен йăлине аса илсе.

— Килĕрех. Мала иртсе ларăр,—терĕ кил хуçи арăмĕ, ачине кăкăр сĕчĕпе тăрантарса лараканскер.—Килçурта пуçтараймарăм паян. Ан ятлăрах. Вырăн тупкаласа ларăр. Ачисем, выляса тавăрăнсан, тумтирĕсене тӳрех сак çине пăрахаççĕ. Хам килте пулман та, пĕтĕмпех тустарса тăкнă. Кооперативра ревизи тума тытăнтăмăр та, час тавăрăнма май пулмарĕ. Мĕн, ĕçпеччĕ-и эсир?

— Еçĕ-мĕнĕ... Сан хĕр пур-и?

— Хĕрĕм те, ывăлăм та пур. Ывăлăм колхоз валли торф тиеме кайнă та каççăр тавăрăнаймасть. Хĕрĕм ирех района тухса карĕ. Ялкорсен совещанийĕ уçăлать паян. Чĕнсех хут янăччĕ те, кайса килесех пуль, терĕ.

Урама тухсан, „хăш киле кĕрес-ши“ тесе шухăшласа тăнă хушăра, туран анакан тепĕр хĕрарăма курсан, ăна кĕтсе илме шухăш тытрĕ. Анчах, хĕрарăмĕ портфель йăтнăскер пулнăран, унпа калаçса „çăвар тутине те сая

ямарě“. Арçынсем тěл пулаççě, анчах Марья Павловнăна арçын кирлě мар.

Кирек хăш киле кěрсен те, ниçта тухса çӳремен тěттěм хěрарăма тупаймасть. Хăшěсем касхи вăтам шкула е агротехника кружокне çӳреççě, вěренеççě, хăшěсем клубри музыкăпа хор кружокне е драмкружока çӳреççě; учительницăсем те тупăнкаларěç, стрелковăй кружока çӳрекенсем те пур. Пěр килте миражист пулса ěçлекен хěр тупăнчě. Миражист? Мěн вăл „миражист“,— Марья Павловна пěлмест, илтмен те вăл сăмаха.

— Миражист—инкубатор патěнче ěçлет, инкубаторпа пусарса кăларма хунă çăмартасенчи чěпěсем мěнле ӳссе пынине тěрěслет.

— Чěмере!—терě хăй ăшěнче Марья Павловна.—Хальхи колхозлă ялта темле професси те пулě.

Урампа, ăна хирěç, пěр туяллă карчăк мěштěртетсе пырать.

— Эсě докладчик-и?—ыйтрě карчăк Марья Павловна тěлне çитсен.

— Докладчик? Мěнле докладчик?—ыйтрě кулса Марья Павловна.

— Ваттисен собранийě пулать, терěç. Çавăнпа пире доклад каласа параканни пулě, терěм-çке. Вăл мар эппин?

Марья Павловна, ҫăварне карса пăрахса, чылайччен пăхса тăчĕ. Шанчăк хутаҫҫи ҫурăлчĕ:

— Хам ухмах пирки тĕттĕм хĕрарăм шырама яла тухрăм. Ухмах, ухмах, тьфу!..

— Ма суратăн?—ыйтрĕ унран ашшĕн мăн ҫĕлĕкне тăхăнса ярăнма тухнă ача.—Йӳҫĕ пулчĕ-и-мĕн?

— Итле-ха, ачам,—терĕ ăна аллинчен тытса Марья Павловна.—Хут пĕлмен хĕрарăм пур-и сирĕн ялта?

— Пур,—терĕ ача.

— Ăҫта пурăнать вăл? Илсе кай-ха мана унта. Сана уншăн канфет парăп,—юрать-и?

— Юрать. Ма илсе каяс мар. Каяс.

— Кайăпăр ҫав. Ăҫта пурăнать-ха вăл?

— Инҫе мар. Пирĕн килтех.

Пӳрте кĕрсен, чуста ҫăрса тăракан амăшĕ патне чупса пырса:

— Ҫак инке пирĕн Людăна кăтартнăшăн мана канфет пама пулчĕ,—терĕ ача хаваслanса.

Ачи ертсе килнĕ хĕрарăм ҫине чăр пăхса илчĕ амăшĕ.

— Кăтартсам ĕнтĕ,—терĕ ача, амăшне аркинчен туртса.

— Халĕ ҫывăрать вăл,—терĕ амăшĕ килнĕ хĕрарăма. — Эсир ача консультацинчен мар пулĕ-ҫке. Пăхма пултаратăр. Сывах-ха вăл. Ҫуралнăранпа пĕрре те чирлеттермен.

Кашни кунах чăпăл тăватăп. Тепĕр уйăхран кулма та тытăнать пулĕ, тетĕп-ха.

„Кулма“ тенине илтсен, Марья Павловна йăпăр-япăр тухса шурĕ.

Марья Павловнăн халăх ĕçне хутшăнман тĕттĕм хĕрарăм шырасси те çавăнпах вĕçленчĕ.

— Общество ĕçне хутшăнма юратакан прислугăран ан хăра, вăл килти ĕçĕсене те культурăллăрах туса пырĕ, ачасене те ырра вĕрентме пултарĕ,—терĕ упăшкам. Эпĕ итлемерĕм. Пур-ши ман пек ухмах хĕрарăм урăх!—терĕ юлашкинчен Марья Павловна, хăйне хăй тем пекех тарăхса.

## ÇИРĔМ ÇУЛТАН

Савăннипе тухнă куççульне шăла-шăла, Ксюша паха хăнасене хирĕç урамах тухрĕ.

— Аттеçĕм! Аннеçĕм! Çирĕм çул хушши курман!..

Ксюша ашшĕпе амăшне сăмах калама памасăр ыталаса чуптуса илчĕ те шакăлтатма тытăнчĕ.

— Эпир хамăр пырасшăнччĕ сирĕн пата. Çирĕм çул хушши пĕр-пĕрне курман вĕт. Питĕ хавас эсир килнĕшĕн, питĕ хавас эсир сывă юлнăшăн. Мĕн тери асап тӳсрĕр пуль!..

— Мĕн эсĕ, Ксюша, ăна кĕр! Урамрах белорусла калаçатăн,—терĕ амăшĕ Ксюшăна, çаннинчен туртса.—Пирĕн пĕр çын урамра белорусла калаçса тăнă та, çавăншăн ултă уйăх хушши тĕрмене хупса усрарĕç вĕт мĕскĕне!

— Эх, карчăк!—терĕ ăна старикки.—Мĕн йӳтесе тăратăн. Совет Союзĕнче кам калаçма чарать? Хăть белорусла калаç, хăть еврейле—чару çук. Пансем çук.

— Ан ятлăрах!—терĕ карчăк, именсе. — Лере тӳссе ирттернисем асран кайман пирки персе ятăм,—терĕ карчăк, чĕтренекен пуҫне тăп тытма хăтланса.

Пӳрте кĕрсен, карчăкпа старик хăлхисене савăнăҫлă музыка сасси янратма тытăнчĕ.

— Аҫтан кунта пан усадьбинче хăш чух илтĕнекен музыка сасси янăраса тăрать?—тĕлĕнсе карĕ старик.

— Радио, теҫҫĕ ăна. Сирĕн ҫук-и вăл?.. Э-э, ҫапла ҫав. Тьфу! Эсир пансен Польшинче пурăннине маннă та!—терĕ хĕрĕ ăшшăн.

Хĕрлĕ галстук ҫакнă ача чупса кĕчĕ.

— Таня!—терĕ ăна амăшĕ.—Аҫуна чĕнсе кил-ха! Петруҫсем патне кайнăччĕ. „Кукаҫипе кукамай килчĕҫ", те. Халех таврăнтăр, кала!

— Кукаҫипе кукамай! Манăн кукаҫипе кукамай ҫаксем пулаҫҫĕ-и? Сывă-и? Эпĕ Таня пулатăп. Шкулта—отличница, килте—ударница,—хăйпе паллаштарчĕ Таня, вата ҫынсене ал тытса.—Ну, эп каям-ха.

— Пан хĕрĕ пек шкулта вĕренет!—терĕ карчăк, Таня ҫиҫе ăшшăн пăхса.—Амăшĕ сăнĕ пур. Миҫе ҫулта-ха?

— Саккăрта. Асли хулара вĕренет.

— Белорусс ачисене те хулари шкула вĕренме илеҫҫĕ-и апла?

— Илмесĕр. Анне, каллех эсĕ эпир Совет Союзĕнче пурăннине мантăн.

— Ай, чӗмере! Каллех лерипе аташатăп. Ачусем хут вӗренеҫҫӗ. Сана вӗрентеймерӗмӗр эпир.

— Эсир вӗрентмен пулсан та, хам вӗрентӗм.

— Хăҫан?

— Таня ҫуралнă ҫул. Халӗ хаҫатсене вырăслисене те, белоруслисене те аванах вулатăп.

— Белорусла? Хаҫат? Хаҫатсем пирӗн чӗлхепе те тухаҫҫӗ-им вара?

— Э-э-э! —терӗ карчăк, старикне юнаса.— Ху та ман пекех Польшăра тӳссе пураннипе аташса ларан. Ан ман—кунта Совет Союзӗ!

Таняпа ашшӗ таврăнсан, калаҫу тивӗҫлипех хӗрсе карӗ. Ваттисем—кунти пурнăҫ чаплинчен тӗлӗнеҫҫӗ... Апат ҫиме ларчӗҫ. Ксюша кăмакаран аш яшки, сысна ашӗпе пӗҫернӗ пăтă тата тем чул хуран кукли кăларса лартрӗ.

— Эсир, Ксюша, сысна пуснă пулас. Сысна ашне ҫисе ярсан, ҫӗр тара илнӗшӗн тӳлеме мӗн сутса укҫа тупăр? — терӗ карчăк, хӗрне ӳкӗтлесе.

— Ан култар-ха!—пӳлчӗ ăна старикки.— Каллех аташма пуҫларăн. Совет Союзӗнче ҫӗршӗн кам укҫа тӳлет! Кунта пансем ҫук вӗт, пӗлетӗн. Лере пирӗн пӗлтӗр хаяр пан ҫӗр укҫи тӳлеменшӗн яла 200 салтак кӳрсе тупăсемпе пертерчӗ. Ял хыпса карӗ...

Таня кукашшёпе кукамăшĕ ҫине куҫ илмесĕр пăхса ларать.

— Шăл сахал-им сан?—ыйтрĕ вăл кукашшĕнчен.

— Ҫăвар тулли шăлччĕ. Виҫҫĕшне ҫамрăк чух раштавпа мăнкун уявĕсенче ӳсĕрпе ҫапса ӳкерчĕҫ, тепĕр виҫҫĕшне—салтакра чух командирсем ҫапса ӳкерчĕҫ, вуннăшне полицисемпе ытти начальниксем ҫапса ӳкерчĕҫ, ыттисене хыт ҫăкăр чăмласа хам пĕтертĕм. Халĕ виҫĕ шăл ҫеҫ юлчĕ,—терĕ старик ним кулмасăр.

Карчăк тутине аллипе хупласа ӳсĕрсе илчĕ те кĕрӳшĕнчен ыйтрĕ:

— Паҫăрах ыйтасшăнччĕ—хăймарăм. Сирĕн икон ҫук. Хăвăр кăларса хутăр-и?

— Хамăр пулмасан кам тата?

— Пирĕн пан-ксендз: икон тытса усракансене большевиксем тĕрмене хупаҫҫĕ, тетчĕ. Чăн-и?

Кĕрӳшĕ тĕн пирки Сталинла Конституцире мĕн каланине ăнлантарса парать.

Старик Хĕрлĕ Ҫара пыриччен чикĕ леш енче пурăннă ялсем Совет влаҫне мĕн тери юратни ҫинчен, вĕсем хăйсене пансенчен ҫăлакан Хĕрлĕ Ҫара мĕн тери пысăк хавасланăхпа кĕтсе илни ҫинчен каласа панă хыҫҫăн, Сталин сăнне курасшăн пулчĕ.

— Ак ҫакă вăл!—терĕ Таня, стена ҫинче ҫакăнса тăракан портрета кăтартса.

Карчӑкпа старик Сталин портречӗ ҫине мӗн тери пысӑк хаваслӑхпа, мӗн тери пысӑк шанӑҫпа пӑхса тӑнине курсан, камӑн чӗри хӗпӗртемӗ?! Вӗсем, тӗттӗм ҫынсем пулсан та, Сталин ҫинчен илтнӗ кӑна мар, ӑна чӗререн юратаҫҫӗ...

Урамра шавланӑ сасӑсем илтӗнсе кайрӗҫ. Ксюша тарланӑ чӳрече кантӑкне алшӑллипе шӑлса илсе:

— Хуларан агитбригада килнӗ пулмалла. Ара, пирӗн ҫитес вӑхӑтсенче суйлавсем пуҫланмалла,—терӗ.

Куна илтсен, карчӑк сасартӑк шуралса кайрӗ.

— Танюша, тумлантар! Япалусене пуҫтар! Нӳхреп пур-и сирӗн? Нӳхрепе кӗрсе ларсан, тупаймӗҫ.

— Эсӗ ма нӳхрепе кӗрсе ларасшӑн?

— Суйлав пуҫланать, терӗн-ҫке ху?

— Вара мӗн?

— Пӑшал пеме тытӑнӗҫ. Саламатсемпе хӗнӗҫ. Ой, пит хытӑ хӗнӗҫ!

Карчӑк каланинчен пурте кулса ячӗҫ.

— Каллех иртнипе аташан!—терӗ старик, ӑна ӳкӗтлесе.—Ҫынна култаран.

— Ара, пирӗн суйлав чух хуларан ялан жандармсем килсе тулаҫҫӗ, хӑшне тӗрмене хупаҫҫӗ, хӑшне хӗнесе пӗтереҫҫӗ. Суйлав тенӗ сӑмахран хӑрама вӗреннӗ. Унщӑн мана ан ятлӑрах, пансене ятлӑр.

— Тискер пансем текех мăшкăлатчĕç,— терĕ старик.—Мĕн чухлĕ куççуль юхрĕ пулĕ пансенчен асап тӳсекен хресчен çĕрĕ çине. Куççулĕпе йĕпетнĕ ана çинче нихăçан та тырă пулмасть... Выçă ларатпăр... Тутă пансем Совета хирĕç вăрçăпа тухма пулеметсемпе тупăсем хатĕрлетчĕç.

— Вĕсем пире хирĕç вăрçăпа тухма хатĕрленнĕ вăхăтра эпир те ахаль ларман. Оборона ĕçне кунран кун, çулран çул тĕреклетсе пытăмăр...

— Çапла кирлĕ те,—терĕ старик.

# ТУПМАЛЛИ

*Стр.*

Çук турăсен „Çук ту“ çинчи конференцийĕ . . . 3
Мĕскĕн Упанкка . . . . . . . . . . . . . . . . 11
Шăнтакан . . . . . . . . . . . . . . . . . . 21
Тĕшмĕш чăпти . . . . . . . . . . . . . . . . . 28
Чĕнмен „хăнасем“ . . . . . . . . . . . . . . . 41
Йăлай Йăкăначĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 47
Пыллă чĕлхе . . . . . . . . . . . . . . . . . 55
Хут хутаç . . . . . . . . . . . . . . . . . . 63
Кукамай çывăрмасть . . . . . . . . . . . . . . 68
Шыракан тупаймарĕ . . . . . . . . . . . . . . 70
Çирĕм çултан . . . . . . . . . . . . . . . . . 78

Цена 2 р. 50 к.

ИВАН МУЧИ

# ЮМОРИСТИЧЕСКИЕ РАССКАЗЫ

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР ◆ 1940